Чебоксар
Л. Б.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938
АПРЕЛ
16
ШАМАТКУН
87 (4900)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Партком отчочӗ— политикӑла пысӑк та ответлӑ ӗҫ

Ҫак кунсенче Шупашкар хулинчи тата районсенчи хӑшпӗр пуҫламӗш парторганизацисенче отчотпа суйлав пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. Ҫывӑхри кунсенчех республикӑри пур пуҫламӗш парторганизацисенче те отчотпа суйлав пухӑвӗсем пулмала. Парти комитечӗсем, парторгсем те хӑйсен ҫулталӑк хушшинчи ӗҫӗсем ҫинчен коммунистсем умӗнче отчот туса параҫҫӗ.

Парти комитечӗн отчочӗ—вӑл политикӑла пысӑк та ответлӑ ӗҫ. Парти комитечӗн отчотӗнче пӗтӗм парторганизаци пурнӑҫне, унӑн лайӑх ӗҫӗсемпе ҫитменлӗхӗсене те кӑтартмала.

Парти комитечӗн отчочӗ тӑрӑх коммунистсем партилӗ ӗҫри руководителсем Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн мӗнле кӗрешнине тӗрӗслеҫҫӗ. Сталин йӳлташ партине,—парти руководителӗсен отчочӗсем—вӗсем кадрсене айалтан пит лайӑх тӗрӗслени пулаҫҫӗ, тесе вӗрентет. Кун пирки парти Тӗпкомӗн февраль-мартри пленумӗнче Сталин йӳлташ акӑ мӗн каланӑ:

„Парти массисем хӑйсен руководителӗсене активсенче, конференцисенче, сессенче вӗсен отчочӗсене итленипе, ҫитменлӗхӗсене критикленипе, йӳлашкинчен, ку йе тепӗр йертсе пыракан органсене суйланипе йе суйламаннипе тӗрӗслеҫҫӗ" тенӗ.

Парти руководителӗсен Сталин йӳлташӑн сӑмахӗсене манмала мар. Кашни партком ҫекретарӗн, парторгӑн отчотлӑ доклачӗ большевикла критикӑпа самокритикӑна хӑйулӑн сарса пыма, ҫитменлӗхӗсене пӗтерме, партилӗ-политикӑлӑ пӗтӗм ӗҫе малашне пур майсемпе те лайӑхлатса пыма пулӑшмалӑ.

Парти комитечӗсен парторгсен ӗҫӗсем ҫинчен отчот тума лайӑх хатӗрленни кирлӗ. Иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тухмала.

Парти комитечӗн йе парторгӑн отчотне лайӑх, татӑклӑ тӑвас тесен, парторганизаци троцкиссемпе, бухаринцӑсемпе, буржуалӑ националиссемпе, халӑхӑн ытти тӑшма... мӗнле кӗрешсе пыни ҫинчен, сӑтӑрла ӗҫсен йӳлашкисене пӗтерме мӗнле организациленни, парти Тӗпкомӗн йанвар уйӑхӗнчи Пленумӗн решенисене мӗнле пурнӑҫлани, парти кадрӗсене мӗнле ӳстерсе ҫитӗнтерни, коммуниссене большевисӑма вӗрентни, парти резервисемпе ӗҫлени, партийе илес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен, парторганизаци умӗнче тӑракан хуҫалӑх планӗсене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен коммуниссене каласа кӑтартмала. Ҫаксем пысӑк та кирлӗ ыйтусем. Ку ыйтусем ҫинчен тӗплӗн, татӑклӑн каласа парас пулать.

Парти организацисем ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ партин йертсе пыракан органӗсен суйлавӗсене иртересси ҫинчен йышӑннӑ постановленине тӗрӗс ӑнланнӑ. Чылай организацисенче отчотпа суйлав пухӑвӗсем активлӑ иртеҫҫӗ. Пренире тухса калакан коммуниссем парторганизацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхӗсене палӑртаҫҫӗ, вӗсене пӗтерме татӑклӑ сӗнӳсем параҫҫӗ.

Анчах хӑшпӗр парторганизацисенче отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртерме кирлӗ пек хатӗрленмен пирки, пухусем йӗркелӗ иртмеҫҫӗ, йе палӑртса хунӑ кун пулмаҫҫӗ. Шалти ӗҫсен халӑх комиссариачӗн Ишлей районӗнчи уйрӑмӗнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухӑвӗ апрелӗн 13-мӗшӗнче пулмала пулнӑ, — анчах пулман. Ҫавӑн пекех МТС тата райӗҫтӑвком ҫумӗнчи парторганизацисенче те апрелӗн 14-мӗшӗнче пулмали отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртермен. Мӗншӗн капла? Мӗншӗн тесен, ку организацисенчи парторгсем отчота хатӗрленсе ҫитмен, ПСК(б)П Ишлей райкомӗ отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртермели плана туниех лӑпланса ларнӑ. Парторгсене отчотсем хатӗрлеме, парти пухӑвӗсене хатӗрленме пулӑшман.

Ҫавиаҫҫалӑх тата Шупашкар хулинчи педагогика институтӗнчи парторганизацийӗнче те отчотпа суйлав пухӑвне иртерме кирлӗ пек хатӗрленмен. Партком ҫекретарӗ Григорйӗв йӳлташ отчотлӑ пухура ҫийелтен, пӗтӗмӗшле, йӑнӑш выранӗсемпе доклад тунӑ. Вӑл: „пирӗн институтра вӗренекен коммуниссем маркссисӑмпа, ленинисӑмпа вӗрентӗвӗсемпе кирлӗ таранах хӗҫпӑшалланнӑ", тесе парторганизацине лӑплантарма пӑхнӑ. Григорйӗв йӳлташ парторганизаци парти Тӗпкомӗн йанвар уйӑхӗнчи пленумӗн решенийӗсене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен пӗр сӑмах та каламан. Анчах пединститутри парторганизаци ӗҫӗнче йӑнӑшсем сахал мар. Кунта ним айӑпсӑр коммуниссенех партирен кӑларнӑ. Ку йӑнӑшсене халӗ мӗнле тӳрлетни ҫинчен докладчик каласа паман. Григорйӗв йӳлташ парти комитечӗн тата хӑйӗн йӑнӑшӗсене те критиклемен. Паллах, пренире тухса каланӑ коммуниссем парти комитечӗн отчочӗпе килӗшме пултарайман. Вӗсем парти организаци ӗҫӗнчи тӗп ҫитменлӗхсене палӑртса, партком ӗҫне урӑхлатса ҫӗнетме сӗнӳсем панӑ.

Йалхуҫалӑхӗн коммунисла аслӑ шкулӗнчи партком ҫекретарӗн отчочӗ те коммуниссене кӑмӑла кайман. Мӗншӗн тесен парти комитечӗн ҫекретарӗ Воробйов йӳлташӑн доклачӗ кичем, татӑклӑ мар пулнӑ. Вӑл уйрӑм коммуниссен ҫитменлӗхӗсене, хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене те критиклемен. Партком членӗсем, группӑри парторгсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен пӗр сӑмах та шарламан. Мӗншӗн тесен партком вӗсемпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Пренире тухса каланӑ коммуниссем партком пропагандиссемпе агитатӑрсене, группӑсенчи парторгсене начар йертсе пынине палӑртнӑ. Паллах, кун пек йӑнӑшсене витӗнтерсе хӑваракан отчотсем коммуниссене кӑмӑла кайма пултараймаҫҫӗ.

Мӗншӗн ку партком ҫекретарӗсен отчочӗсем конкретлӑ мар тата критикӑпа самокритикӑсӑр? Мӗншӗн тесен вӗсем кашни коммунисӑпа уйрӑмӑн ӗҫлемеҫҫӗ, вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен пӗлмеҫҫӗ. Вӗсем пирӗн Ленинпа—Сталин партийӗн вӑйӗ ҫитменлӗхсене уҫҫӑн палӑртса, ҫитменлӗхсене пӗтерес ӗҫе пӗтӗм массӑна мобилизациленинче иккенне ӑнланман.

Пуҫламӗш парторганизацисенчи отчотпа суйлав пухӑвӗсем хаљ ҫеҫ пуҫланчӗҫ. Парти комитечӗсен, парторгсен те ҫак ҫулте кӑтартнӑ йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсенчен хӑйсене ваљљи тивӗҫлӗ вывӑдсем тумала. Парти комитечӗн отчочӗ коммуниссен активлӑхне хӑпартма, критикӑпа самокритикӑна вӑйлатма, тӑшмансене тӗппипех тӑпӑлтарса кӑларма, партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе малашне те лайӑхлатса пыма, хуҫалӑхлӑ задачӑсене ӑнаҫлӑн пурнӑҫа кӗртме, парти массисене партин сталинла Тӗп Комитечӗ тавра татах та ҫачӑрах пӗтӗҫтерме пулӑшмала.

Азербайджан искусствин вунӑкунлӑхӗ Мускаврa

„Кӗр-Оглы" опӗрӑн калама ҫук пысӑк ӑнӑҫӑвӗ

М. Ф. Ахундӑв йачӗпе тӑракан театрӑн чаплӑ ҫпектаклӗнче И. В. Сталин, В. М. Молӑтӑв, К. Й. Ворошилӑв В. Й. Чубарь, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, М. Д. Багирӑв йӳлташсем пулнӑ.

Азербайджан ССР Республикӗн халӑх артисӗ Узеир Гаджибекӑв ҫырнӑ „Кӗр-Оглы" опӗрӑна апрелӗн 14-мӗшӗнче виҫҫӗмӗш хут кӑтартнӑ, Азербайджан искусствин вунӑ кунлӑхне Мускавра ҫав опӗрӑна кӑтарнипе пуҫласа йана пулнӑ. Ҫак вӑл Азербайджанри М. Ф. Ахундӑв йачӗпе тӑракан опӗрӑпа балет государствӑ театрӗн йӳлашки ҫпектаклӗ пулнӑ. Ана ССР Сойуз государствин Ленин орденлӗ Академилӗ Пысӑк театрӗн сцени ҫинче кӑтартнӑ.

Узеир Гаджибекӑвӑн композитӑрлӑ маҫтӑрлӑхне ҫпектакљ кӳракансем каллех хӗрӳлӗн кӗтсе илнӗ. Дирижор Ашраф Гасанӑв йертсе пыракан оркестр увертӳрӑ вылљаса пӗтерсенех залӑра шавлӑн алӑ ҫупни йанраса кайнӑ.

Мухтавлӑ герой Кӗр-Оглы ҫинчен авалхи йумах тӑрӑх тунӑ опӗрӑри ӗҫсем мӗнле аталанса пынине ҫпектакљ куракансем иксӗлми интереспа сӑнаса пӑхса ларнӑ, ҫав Кӗр-Оглы геройа халӑх калама ҫук чаплӑ пахалӑхсемпе сӑнласа кӑтартнӑ, Кӗр-Оглы вӑйлӑ, хӑйулӑ пулнӑ, часах тавӑрса илме пултарнӑ, шиксӗр пулнӑ.

Ҫак кун тӗп партисене вылљакансем Азербайджан СС Республикӗн тава тивӗҫлӗ артисӗ Бӳљ-Бӳљ (Кӗр-Оглы), солисткӑ Кнарик Григорйан (Никйар-Кӗр-Оглы йӳратнӑ хӗр), Азербайджан СС Республикӗн тава тивӗҫлӗ артисӗ М. Т. Багирӑв (Гасанхан) т. ыт. пулнӑ.

Паха вылљаса панӑ массӑлӑ сценӑсем пит кӑмӑла кайнӑ. Музыкӑлӑ пысӑк культурӑпа палӑрса тӑракан хорсем йӗркелӗн те килӗшӳлӗн йанӑрана. Азербайджан халӑхӗн ташшисене шавлӑн алӑ ҫупса саламланӑ. Балет солистки Гамер Амиаз-Заде малтанхи ҫпектакљсенчи пекех паха маҫтӑрлӑхӑн тӗслӗхӗсене кӑтартса панӑ. Халӑх геройӗ ҫинчӑн хывнӑ „Кӗр-Оглы" опӗрӑ калама ҫук пысӑк ӑнӑҫлӑхпа иртнӗ.

Ҫпектакљте И. В. Сталин, В. М. Молӑтӑв, К. Й. Ворошилӑв, В. Й. Чубарь, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, М. Д. Багирӑв йӳлташсем пулнӑ.

Опӗрӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн залри халӑх ҫпектакљте вылљакансене хӗрӳлӗн саламланӑ.

(ТАСС)

Парти оргӑнӗсен отчотпа суйлав пухӑвӗсем

Чикмент

Чикмент (Туркҫиб) чукунҫул узелӗ ҫумӗнчи парторганизацинче отчотпа суйлав пухӑвӗ пулса иртнӗ. Узелти партком ҫекретарӗ парторганизаци троцкисла-бухаринла тата национал фашисла сӑтӑрҫӑсемпе, шпионсемпе мӗнле кӗрешсе пыни ҫинчен каласа панӑ. Троцкисла-бухаринла тата национал-фашисла сӑтӑрҫӑсемпе шпионсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, вӗсене тымарӗпех кӑкласа пырса парторганизаци чукунҫул узелне кайа йулса пынӑ ҫӗртен малти рете кӑларни ҫинчен каласа панӑ вӑл. Парторганизацин йышне чи лайӑх стахановӗцсем хутшӑннӑ. Хаљи вӑхӑтра чукунҫул узелӗнче 746 стахановӗц шутланать.

Парткомӑн отчотлӑ доклачӗ тӑрӑх пренире 30 коммунис тухса каласнӑ. Коммуниссем партилӗ ӗҫӗн ҫитменлӗхӗсене ҫивӗччӗн уҫса кӑтартнӑ.

Ташкент

Ташкентри парторганизацисенче суйлавсене начар хатӗрленнӗ. Пирвайхи отчотпа суйлав пухӑвӗсем сӳрӗк иртнӗ. Хӑш-пӗр организацисенче пухусем тума палӑртнӑ вӑхӑтра пулман, вӗсене тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ.

Узбекистан К(б)П Тӗпкомӗн Ташкент облӑҫӗнчи оргбӳровӗ парторгӑнсен суйлавӗсене начар йертсе пырать. Ҫавна пула выранӗсенче йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ. Йангли—Йуљск райкомӗн руководителӗсем докладчиксем ваљљи йатарласа схемӑ туса, ӑна докладчиксене ваљљи пуҫламӗш парторганизацисене йанӑ.

Серпухов

Серпухов районӗнчи Глазӑвск йалсоветӗнчи парторганизацинче отчотпа суйлав пухӑвӗ пӗр сехет кайа йулса пуҫланнӑ. Парторг доклада начар хатӗрленнӗ. Вӑл самокритикӑ мӗнле выранӑ йышӑнса тӑни ҫинчен тата революцилӗ сисӗмлӗхе ӳстересси ҫинчен нумай каланӑ, анчах парторганизаци ӗҫе ҫинчен нимӗн те каламан.

Тухса калаҫакан коммуниссем парторг ӗҫне хыттӑн критикленӗ, ҫавӑн пекех йалти организацисене начар йертсе пынӑшӑн хула комитетне те хыттӑн критикленӗ.

(ТАСС).

В. И. ЛЕНИН.
1920 ҫул. Польшӑ фронтне кайакан хӗрлӗ бойецсем умӗнче сӑмах калать.

Сойузфото репродукцийӗ.

Апрелӗн 10-мӗш тӗлне ҫурхи тырӑсене 11.494 пин гектар акнӑ

Сойузӑн ҫурҫӗр тата Хӗвелтухӑҫ тӑрӑхӗнче уйсем йӳртан тасалаҫҫӗ. Ҫураки ӗҫне ҫӗнӗ районсем тытӑннӑ.

Сойуз тӑрӑх апрелӗн 10-мӗш тӗлне ҫурхи тырӑсене 11.494 пин гектар акнӑ. Государствӑ планне 14 процент тултарнӑ. Иртнӗ ҫулта ку вӑхӑт тӗлне 14.568 пин гектар акнӑ пулнӑ. Колхозсем 10.501 пин гектар акнӑ йе плана 14 процент тултарнӑ, совхозсем пур ҫиҫтемӑсем тӑрӑх та 993 пин гектар акнӑ, йе плана 13 процент тултарнӑ.

Ака тӗлӗшпе Сталинград, Саратӑв, Воронӗж, Тамбов тата Курск облӑҫӗсенчи колхозсемпе совхозсем пачах ҫителӗксӗр ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Саратӑвпа Сталинград облӑҫӗсенчи хӑшпӗр районсенче ҫӗр типме пуҫланӑ анчах колхозсемпе совхозсем хӑйлӑ вӑхӑта сайа йараҫҫӗ.

(ТАСС).

Совет Сойузӗ тӑрӑх

■■ Кӑҫалхи ҫул Белоруҫҫи СС Республикӗнчи аслӑ шкулсем квалификацилӗ специалиссем—инженерсем, педагогсем, агрономсем, врачсем 3 пин ҫын ытла вӗрентсе кӑлараҫҫӗ.

■■ РСФСР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем ҫак ҫулти пӗрремӗш кварталта государствӑна сӗт парас плана 101,6 процент, аш-какай парас плана — 115,1 процент тултарнӑ. Сет парассине иртнӗ ҫулхи пӗрремӗш квартӑлтипе танлаштарсан 44 процент, аш-какай парассине—181 процент иртерсе тултарнӑ.

(ТАСС).

Й У Т Ҫ Ӗ Р Ш Ы В С Е Н Ч Е

Испани республикӗ 7 ҫул тултарчӗ

Апрелӗн 14-мӗшӗнче Испани республикӗ 7 ҫул тултарчӗ.

Йут ҫӗршывсенчи политикӑлӑ тата обшчӗствӑлӑ паллӑ деятелсем чылайӗшӗ вӑрҫа тата фашисӑма хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшпе ӗҫлекен Пӗтӗм тӗнчери комитет урлӑ Испани республикӗн правителствине саламлӑ телеграммӑсем йанӑ.

Ромен Роллан хӑйӗн ҫырӑвӗнче ҫапла каланӑ: „Испани республикӗ Испани историн тата ирӗклӗхӗн чи мухтавлӑ страницисене хӑйӗн йунӗпе ҫырса хучӗ. Вӑл хӑйсем никама пӑхӑнса тӑмасӑр пурӑнасшӑн кӗрешекен тӗнчери пӗтӗм халӑхсене чаплӑ пример парать. Италипе Германири фашисла палачсене—ӗмӗрлӗхех намӑс!.. Испанине пӗтерсе лартма пур усал та ирсӗр вӑйсем темӗн пек тӑрӑшсан та, Испани ҫӗрӗ ҫинче восстанипе ҫав усалсене таварӑкан никам тытса чарайми вӑй пухӑнать. Ҫав вӑй варвӑрсене тӗп тӑвӗ".

(ТАСС).

Вӑрттӑн склад тупнӑ

Љйежӗ хулинче (Бельги) пӑшалсем пытарса усрамали вӑрттӑн склад тупнӑ. Унта 14 пулемет, 20 винтовкӑ, патронсем тата ҫав пӑшалсем Бельгири гитлӗрла организацисен иккенне ӗнентерекен докумӗнтсем тупнӑ.

Лондон хулин урамӗсенче (Англи) Йапонийе хирӗҫ демонстраци тӑваҫҫӗ. Плакатсем ҫинче: „Йапони таварӗсене ан илӗр, Йапони вӑрҫӑпа тапӑннине чарса лартма пулӑшӑр", тесе ҫырнӑ.

Сойузфото.

Чехословакире Майӑн 1-мӗшӗнче демонстрацисем тума чарнӑ

Чехословаки правителстви пухусемпе демонстрацисем тума чарнине майӑн 1-мӗшне ҫитиччен тӑсма йышӑннӑ, унӑн срукӗ апрелӗн 30-мӗшчен пулнӑ. Ҫав решенипех майӑн 1-мӗшӗнче демонстрацисем тума чарнӑ. Майӑн 1-мӗшӗнче демонстрацисем тума чарни Чехословаки республикӗ пулнӑранпа ҫирӗм ҫул хушшинче чи пирвайхи хут пулнӑ йапала. Ку вӑл правителствӑ йӗнчен реакцилӗ партисене тата Германи фашисӑмӗн генлейнла агентурине, демократишӗн тата Чехословаки ирӗклӗхӗшӗн халӑхсен массӑлӑ йухӑмӗ сарӑлса кайассинчен хӑраканскерсене, уступкӑ тунине пӗлтерет.

(ТАСС).

Гитлӗрӑвӗцсем Мемӗлре

Мемӗл вӑл—Балти тинӗс хӗрринчи порт, Клайпед автономлӑ облӑҫӗн центрӗ. Вӑл Литвана кӗрет.

Мемӗле хӑйӗн пӗчӗк парламенчӗ — сейм тытса тӑрать. Вӑл парламӗнта 1924 ҫулта Лига наци ҫирӗплетнӗ уйрӑм положени никӗсӗ ҫинче тунӑ.

Фашисла Германи Мемӗле тахҫанах туртса илме хӑтланать.

Апрелӗн 12-мӗшӗнче сейм ларӑвӗнче гитлӗрӑвӗцсем Мемӗлрен Литва полицине илсе кӑларса, ун выранне нимӗҫ полицине лартма ыйтнӑ. Ҫавӑн пекех гитлӗрӑвӗцсем Мемӗл территоринче фашисла партине уҫҫӑн ӗҫлесе пымала тума ыйтнӑ.

Ҫак требованисене пӗтӗм Германи пичече хапӑллать. Мемӗлри лару-тӑру—питех те ҫивӗч. Мемӗлри гитлӗрӑвӗцсем аллинче тӑракан пур ҫуртсем ҫумне те Германин фашисла йалавӗсене ҫакса йанӑ. Мемӗл фашисӗсем ҫитес ҫывӑх кунсенче ҫӗнӗ выступленисем тума хатӗрленеҫҫӗ пулмала.

Ендер доктӑра арӗсленӗ

Германи полицийӗ малтан Австри канцлерӗ пулнӑ Ендер доктӑра арӗсленӗ. Ендер ывӑлӗ хӑйӗн ашшӗне полицирен хӳтӗлеме хӑтланнӑ пулнӑ, анчах ӑна та хупса лартнӑ.

(ТАСС).

Суйлав кампанийӗ сойузлӑ республикӑсенче

Грузин СС Республикӗнче

Грузири ӗҫҫынисем республикӑн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ Грузин СС Республикӗн Верховнӑй Совечӗн суйлавӗсен кунӗ ҫинчен йышӑннӑ постановленине пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илнӗ.

Грузи ӗҫҫынниӗсен ҫӗкленӳне Тбилиси станцинчи рабочи Григорашвили йӳлташ хӑй пухура тухса каланинче лайӑх кӑтартса панӑ.

— 1938 ҫулхи ийунӗн 12-мӗшӗ,—тенӗ вӑл,— Грузи историнче калама ҫук чаплӑ кун пулса тӑрать. Ҫав кун Грузи халӑхӗ хӑйӗн республикӗн верховнӑй органне хӑйӗн чи лайӑх ывӑлӗсене суйлать. Ийунӗн 12-мӗшӗнче Грузи халӑхӗ коммуниссемпе партире тӑманнисен никам ҫӗнтерейми блок хӑватне, Ленин—Сталин ӗҫне вӗҫӗмсӗр йӳратса тӑнине татах та тепӗр хут кӑтартса парать.

Республикӑри хуласемпе йалсенче нумай ҫынлӑ митингсем пулса иртнӗ. Суйлав кампани пуҫланнине рабочисен коллективӗсем производствӑлӑ плана пурнӑҫа кӗртес кӗрешӗве вӑйлатнипе паллӑ тӑваҫҫӗ.

Армйан СС Республикӗнче

Ереванри предприйатисенче, учрежденисенче тата аслӑ шкулсенче апрелӗн 14-мӗшӗнче пухусем пулса иртнӗ. Вӑл пухусенче Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Совет суйлавӗсем тӑрӑх округри суйлав комиҫҫисене кандидатсем тӑратнӑ.

Тӗп Суйлав Комиҫҫи хӑйӗн малтанхи ларӑвӗнче пур суйлав докумӗнчӗсен формине те ҫирӗплетнӗ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пединститутри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ

Апрелĕн 11—13-мĕшĕсенче пединститутри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Партком çекретарĕ Григорйĕв йулташ отчотлă доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн отчотĕнче фактсене ӳстерсе, мухтанарăх калама тăрăшрĕ. Вăл каланă тăрăх партком ĕçĕнче çитменлĕхсем çук пек. Акă, пединститутри коммуниссемпе партире тăман студентсем хушшинче политикăла воспитани ĕçне пит лайăх организациленĕ пек кăтартать. „Пирĕн организацинчи коммуниссем Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе çителĕклĕ таран хĕçпăшаллантнă",—тет. Кунти коммуниссем пурте кружоксенче тăрса парти историне тата ленинисăма вĕренеççĕ. Политикăла воспитанилĕ ĕçе чăнах та начарах организацилемен.

Анчах, çитĕнӳсемпе мухтанни килĕшмест. Коммуниссем нихăçан та тупă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Ку ĕçе тата темиçе хут лайăхлатни кирлĕ.

Парторганизаци парти ретне çĕнĕрен кандидатсем илес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен. Пĕр çулталăк хушшинче те 5 çынна анчах парти кандидатне илнĕ. Кандидатран члена ултă çынна куçарнă, сочувствуйущине 5 çын илнĕ.

Пединститутра мĕн пурĕ 700 студент, вĕсенчен 315 комсомолец. Çак студентсем хушшинчен парти ретне кĕме тивĕçлисем чылайăх ĕнтĕ. Анчах вĕсемпе партком çителĕклĕ ĕçлесе пыман пирки, парти ретне кĕреймесĕр тăраççĕ.

Григорйĕв йулташ хăйĕн отчотĕнче иртнĕ суйлавра парти организацине парса хăварнă наказа мĕнле пурнăçласа пыни çинчен те, ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенине парторганизаци мĕнле пурнăçласа пыни çинчен те каламарĕ.

Парти членĕсем çине çăмăлттайла пăхса, пĕр айăпсăрах партирен кăларнисем парторганизацинче чылайăх пулнă. Ку ĕçре партком çекретарĕ пулса ĕçленĕ Д. Панкратăв уйрăмăнах хăйĕн „активлăхне" кăтартнă. Кунта В. Андрейĕв, С. Николайĕв, В. Софрошкин йулташсене айăпсăрах партирен кăларнă пулнă. Руденко йулташа „халăх тăшманĕ" тесе айăплама пикеннĕ. Панкратăв институт директăрĕ Харитонăв йулташ çинчен, ăна ĕçрен кăларттарас тесе, елеклĕ çыру йанă.

Халăх тăшманĕсем—буржуалă националиссем: институт директăрĕ пулса ĕçленĕ Кутăшов, преподавательсем пулса ĕçленĕ Матвейĕвна П. Захарăв вĕренӳ тата хуçалăх тĕлĕшпе сăтăрла ĕçсем тунă. Çав тăшманĕсен тĕллевĕ — пединститут ĕçне йăлтах йухăнтарса, пĕтерсе лартасси пулнă.

Халăх тăшманĕсене—Кутăшова, Матвейĕва, Захарăва тăрă шыв çине кăларса тивĕçлипе ответ тыттарнă. Анчах ĕç унпа пĕтмест. Тăшмансем туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтермеле. Бол̧шевикла сыхăлăха нихçанхинчен те çӳлĕ вырăна хăпартмала. Тăшманла елементсен йулашкийĕсене пĕр çын йулмиччĕнех тăрă шыв çине кăларса, тĕпĕ тымарĕнех кăкласа пăрахмала. Институтри вĕренӳ ĕçне тĕпрен лайăхлатса, марксисăм-ленинисăм идейĕпе пур йенчен те туллин хĕçпăшаллантнă, пултарулăхлă, совет влаçне тата Ленин — Сталин партине пĕтĕм чĕререн парăннă преподавательсем вĕрентсе кăлармала. Çак задачăсене пурнăçласси вăл пĕтĕмпех парторганизаци. ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ, аслă Сталин йулташ вĕрентсе пынă тăрăх ĕçлесе пынинчен килет. Пĕр ывăнмасăр, ӳркенмесĕр, тăрăшса ĕçлесе парторганизаци хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене пурнăçламала. Кашни коммунис малти ретре пулса, йаланах примерлă ĕçлемеле, вĕрентмеле. Пединститутра ĕçлекен тата вĕренекен коммуниссен пахалăхне, вĕсен пултарулăхне кăтартаканнисенчен пĕри вăл—вĕренӳре ĕлкĕрсе пыни. Институтра вĕренекен студентсем 95 процент таран ĕлкĕрсе пыраççĕ. Анчах, калас пулать, хăшпĕр группăсенче 75 процент кăна ĕлкĕрсе пынисем те пур. Отличнă вĕренекенсем ытлах та сахал. Вĕсен шучĕ 5 процентран та иртмест. Коммунис студентсем вĕренӳре малти ретре пулмала, анчах та хăшпĕр йулташсем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем те пур-ха (Гаврилăв, Николайĕв, Дорофейĕвă, Алексейĕв).

Студентсем, уйрăмăнах, вырăс чĕлхипе питĕ начар вĕренеççĕ. Малашне ку çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемелли паллах ĕнтĕ.

Пренире тухса каланă йулташсем пурте, тенĕ пекех Григорйĕв йулташ хăйĕн отчотĕнче ПСК(б)Парти Тĕпком пленумĕн решенине мĕнле пурнăçласа пыни çинчен каламасăр иртсе кайнăшăн хытă критиклерĕç. Çавăнпа пĕрлех Григорйĕв йулташăн çитменлĕхĕ пирки çапла каларĕç.

Григорйĕв йулташăн тĕп çитменлĕхĕ — коммуниссене вĕрентсе, ĕçре пулăшса пыманни, пулăшас вырăнне вăрçса, кирлĕ мар сăмахсемпе хăртса тăкни. Вăл самокритикăна йуратмасть, хăйне критиклекенсене çиллесе сӳрет. Кĕскен каласан, Григорйĕв йулташ хăйне партикомра ĕçлекен пек тытмасть. Паллах ĕнтĕ кун пек ĕçлесе парти организацине кирлĕ пек йертсе пыма май çук. Кун пек руководител массăран уйрăлса кайать. Организацинчи коммуниссен тата партире тăман çынсем умĕнче те авторитетне çухатать.

Самокритикăна аплăн сарса, çитменлĕхсене пĕтересси малти вырăнта тăмала, анчах пединститутри парторганизацинче хăшпĕр коммуниссем, Григорйĕв йулташ майлах, самокритикăна йуратмаççĕ. Тĕслĕхшĕн Руденко йулташах палăртмала. Вăл хăйне критикленине пĕре те тӳсеймест, йаланах çиллĕнет, кăтартнă çитменлĕхсене йышăнмасть. Самокритикă çине вăл мĕнле пăхни çак пухура питĕ те уççăн курăнчĕ.

Пренире тухса каланă йулташсем партком парти пухăвĕсенче йышăннă решенисене пурнăçламаннине, уйрăм коммуниссене панă порученисене вăхăтра тĕрĕслесе пыманнине палăртрĕç. Отчотпа учот ĕçĕнче тата партдокументсене йĕркелесе пырас тĕлĕшпе те çитменлĕхсем нумай çинчен каларĕç. Парти хуçалăхне кирлĕ пек йĕркелес тĕлĕшпе ПСК(б)П хула комитечĕ те çителĕклĕ пулăшман.

Пединститутри парторганизацинчи хăшпĕр коммуниссем партбилетсене сыхласа усрасси çине сӳрĕккĕн, ответлăха туймасăр пăхни курăнчĕ. Отчотпа суйлав пухăвне виçĕ коммунис партбилетсемсĕр пычĕç.

Пуху питĕ активлăн иртрĕ. Пренире 23 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте парторганизаци ĕçне лайăхлатса, примерлă ĕçлемеле тăвас пирки кирлĕ те вырăнлă сĕнӳсем парса хăварчĕç.

Пуху çĕнĕрен суйланă партком малашне мĕнле ĕçлесе пымалине тĕплĕн кăтартакан решени йышăнса хăварчĕ. Çĕнĕрен суйланă партком отчотпа суйлав пухăвĕ кăтартса хăварнă сĕнӳсене пурне те кулленхи ĕçре бол̧шевикла пурнăçласа пыма, пединститутра партилĕ-политикăла ĕçе тивĕçлипе организацилеме ĕç планĕ тумала. План тăрăх хастарлăн ĕçлесе пырса, Ленин — Сталин партийĕн йалавне çӳле çĕклемеле.

Н. Косойкин.

Хаçатра критикленĕ хыççăн

Апрелĕн 10-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçатра Çутĕç халах комиссариачĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне начар хатĕрленни çинчен çырса кăларнă. Çак статйа тухнă хыççăн парти Тĕпкомĕ партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине коммуниссен пухăвĕнче тепĕр хут сӳтсе-йавнă.

Пренире тухса каланă йулташсем парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме татăклă сĕнӳсем панă. Парторганизаци уйрăмах иртнĕ отчотпа суйлав пухăвĕн решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Пуху, иртнĕ вăхăтри пухусенче йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме 3 çынран комиççи турĕ. Комиççире тăракан Богданăв, Трофимăва, Кул̧савă йулташсем тепĕр кунах ку ĕçе тĕрĕслеме тытăннă. Пуху хыççăн чылайĕшĕ социалисăмла ăмăртăва хутшăнчĕç. Халĕ 12 çын ăмарту догăварĕсем турĕç.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче пуçламĕш парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕ пулать. Парторг Çмелов йулташ командировкăна кайнă коммуниссене пурне те пуху пуласси çинчен пĕлтернĕ.

Хула комитечĕн инструктăрĕ—
Атлашĕвă.

Ответлăха туйман парторгсем

ИШЛЕЙ, (телефон тăрăх). Парти Тĕпкомĕ йертсе пыракан парторгансен суйлавĕсене ирттересси çинчен йышăннă постановленийĕ сӳтсе-йавма районри парти активĕн пухăвĕ пулчĕ. Районри парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене ирттерме татăклă план йышăннă.

Районра пуçламĕш парторганизацисем 7 тата кандидат групписем 2. Вĕсенчен иккĕшĕнче (Алинора тата районри финанс пайĕнче) отчотпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ.

Ответлăха туйман парторгсем çинчен уйрăмах калас пулать. МТС çумĕнчи тата райĕçтăвком çумĕнчи парторганизацисенче апрелĕн 14-мĕшĕнче, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн районри отделени çумĕнчи парторганизацинче апрелĕн 13-мĕшĕнчех отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртмеле пулнă. Анчах кунти парторгсем ответлăха туйман пирки, вĕсем отчот туман хатĕрленмен. Çавăнпа пухусем пулман. ПСК(б)П райкомĕ вăл парторгсем çинчен сӳтсе-йавса, вĕсене ответлăха туйманшăн хытă асăрхаттарчĕ. Вăл организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене ирттермели срукcене палăртрĕ.

Павлăв.

Агитатăрсем ĕçре

СĔНТЕРВĂРРИ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленес ĕç кунран кун вăйланса пырать. Суйлавсене хатĕрленсе районра 273 кружок организациленĕ. Вĕсене 5723 суйлавçăна хутшăнтарнă.

Суйлав саккунĕсене вĕрентес ĕçре Кайри Шĕнерпуç йалсоветĕнче—Петров, Аксарин йалсоветĕнче—Лебедĕв агитатăрсем лайăх ĕçлеççĕ. Кружоксен занятийĕсене вăхăтра ирттереççĕ, суйлав саккунĕсене кружоксенче вĕрентнисĕр пуçне пухусенче те ăнлантараççĕ. Вĕсем ăнлантарулă ĕçе çуракипе тата ытти ĕçсемпе те çыхăнтарса пыраççĕ.

Г. Çмирнов.

Белорус СС Республикĕнчи Могилов районĕнчĕ колхоз работникĕсен квалификацине ӳстерекен шкул йаланах ĕçлет. Шкулта колхоз председателĕсемпе бригадирсем вĕренеççĕ. ССР Союзĕн Национал̧нăссен Совечĕн депутачĕ колхозница С. С. Йевменăвă йулташ та ку шкулта вĕренет.

Ӳкерчĕк çинче: Арифметикă урокĕ. Сулахайра—С.С. Йевменăвă йулташ.

Г. Самарăв фото-ӳкерчĕкĕ.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе хăçанччен тăсмала тата

Партипе правительствă, çитĕннисем хушшинче хутпĕлменлĕхе 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтермеле, тесе кăтартса панине пирĕн Чăваш республикĕ пурнăçлаймарĕ.

Кăçалхи çул пуçламĕшĕнче шута илнĕ тăрăх, республикăра хут пĕлменнисем тата 2.212 çын пурри курăнчĕ. Вĕсенчен çак иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче 287 çын вĕрентсе кăларнă. Çапла вара хут пĕлменнисем пайанхи кун тĕлне 21.925 çын шутланаççĕ. Кусен çумне тата хут сахал пĕлекен 20.000 çынна хушсан, вĕсенчен темĕн пысăкĕш çар пулса тăрать.

Çав вăхăтрах, çакна куратăркачах, çитĕннисене вĕрентес ĕçе пĕр районра та тивĕçлипе йĕркелемен. Пĕтĕм республикĕпе пайанхи кун хут пĕлменнисенчен 10.652 çын, хут сахал пĕлекенсенчен 13.778 çын вĕренет. Анчах ку цифăрсене ĕненме хĕн, мĕншĕн тесен, республикăра çитĕннисен йĕркелĕ ĕçлесе пыракан шкулĕсем питех те сахал. Тӳррипе каласан, хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене шута илнĕ чух чылай çĕрте, иртнĕ йалапа, суйма пăхаççĕ. Палсенче лайăхрах тĕпчесе тĕрĕслени пире çĕнĕрен-çĕнĕ хут пĕлмен çын тупса парать. 1936—37-çулхипе танаштарсан, хут пĕлменнисен йышĕ кăçалхи çул тĕлне 8.852 çынна йахăн ӳсни курăнать.

Республикăри йертсе пыракан оргăнсене сăрхăнса кĕнĕ халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринцăсем, буржуалă националиссем хутпĕлменлĕхпе кĕрешес ĕçре те сахал мар сăтăрларĕç. Тăшмансем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене халăха кул̧турăсăр, тĕттĕмре хăварас ĕмĕтпе туса пынă. Вĕсем республикăра хутпĕлменлĕхе пĕтернĕ тесе, суйа рапăртсем çырнă, çапла май пирĕн кĕрешĕве йăвашлатма пăхнă.

Чылай районсенче хутпĕлменлĕхе пĕтерессине политикăла пысăк ĕç вырăнне шутламан. Партипе советсен вырăнти хăшпĕр организацийĕсем В. И. Ленин: „хут пĕлмен çын политикă тулашĕнче тăрать" тенине манса кайнă, çавăнпа та вĕсем çитĕннисене вĕрентес ĕçрен пачах айаккала пăрăнса тăнă. Хут пĕлменнисене шута илнĕ чух нумай çĕрте йури пăтраштарнă, тĕрĕс мар сводкăсем тунă. Сăмахран, арап-аран алă пусакансемпе саспалли пĕлекенсене хут пĕлменнисен шутне мар, сахал пĕлекенсен шутне кĕртнĕ. Çапла тунипе Чăваш республикĕнчи чылай районсем (Вăрнар, Тутаркас, Куславкка, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Вăрмар т. ыт. те). талккишĕпе хут пĕлекен районсем пулса тăнă.

Хутпĕлменлĕхе çакнашкал çăмăллăн „пĕтерни" хыççăн, çитĕннисен уйчен чипер ĕçлесе пынă шкулĕсем те йапăхса кайнă. Кул̧турă фрончĕн çак ответлă участкă манăçа йулса пынă. Кăш-кăш вĕренсе азбукăпа паллашнă çынсем мĕн вĕреннипе татах манса пуçланă. Хут сахал пĕлекенсенчен татах нимĕн пĕлмен çынсем пулса тăнă.

Халĕ хутпĕлменлĕхе пĕтерес ыйту республикă умĕнче çивĕч тăрать. Тупатуса йышăннă срукcем пурте иртсе кайрĕç, тем тĕрлĕ çирĕп обйазательствăсем пурнăçланмасăр йулчĕç. Малала кун пек йухăнчăка тӳсме çук. Тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтермеле, кул̧турă фрончĕн пысăк участкине—хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе бол̧шевикла организацилемеле.

Анчах Çутĕç комиссариачĕпе вырăнти çутĕç оргăнĕсем, çитĕннисен шкулĕпе унта ĕçлекен учительпе йертсе пырас вырăнне, халĕ те-ха кабинетсенче сводкăсем çырса лараççĕ, вĕçĕмсĕр тĕрĕслӳсем туса ирттереççĕ. Политикăла пысăк ĕç хут айне пулса пырать. Пакăлтатма пăрахмала, ĕçлеме тытăнмала! Сăмаха ĕçпе çыхăнтармала!

Халĕ çитĕннисен йĕркелĕн ĕçлесе пыракан шкулĕсем вĕренӳ çулне вĕçлеме, çынсене тĕрĕс вĕрентсе кăларма хатĕрленеççĕ. Ку ĕçе йĕркелеме пĕлнинчен малалахи ĕçсен ăнăçлăхĕ килет. Çитĕннисен шкулне чăн-чăн шкул вырăнне хурса, пĕлӳ тĕрĕслевĕсемпе екзаменсене çирĕп йĕрке тăрăх ирттермеле. Шкултан вĕренсе тухакан çын хут лайăх пĕлекен çыннăн аттестатне илсе тухтăр. Анчах çитĕннисен шкулĕсенче пĕлӳ тĕрĕслевне йĕркелес тĕлĕшпе çутĕç оргăнĕсем нимĕнех те туман-ха. Хăшпĕр шкулсем çуркунне çитнĕ май салана пуçларĕç. Паллах, кун пек пулсан, хĕллĕ вĕренни, вăхăт иртерни ахалех сайа кайать. Программăна тĕплĕн вĕренсе пĕтермесĕр, мĕн вĕреннине саккунлă тĕрĕслесе тухмасăр шкул хăй ĕçне татнă теме çук. Çитĕннисен шкулĕсен вĕçне çитиччĕнех ĕçлемеле, вĕренекенсене паха пĕлӳ памала.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе пĕр учительсемпе шкулсен кăна мар, пĕтĕм общĕствăлă организацисемпе учрежденисен, партипе совет организацисен туса пымала. Анчах калас пулать, ку ĕçрен пăрăнакансем, ăна урăххисем çине тӳнтерекенсем пирĕн питех те нумай.

Хăшпĕр çĕрте халĕ те „хутпĕлменлĕхе пĕтертĕмĕр" тесе тыттарма пăхаççĕ. Акă сăмахран, Ишлей районĕнчи Тăрăн йалсоветĕ шутланă тăрăх, ун территорийĕнче кĕрекен йалсенче хутпĕлменнисем кăçалхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 21 çын çеç пулнă. Анчах тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн кунта хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 244 çынна йахăн тупăнчĕç.

Çавăн пекех Вăрнар районĕнчи Елмен йалсовет председателĕ Виноградăвă та 1937 çулта хутпĕлменлĕхе пĕтертĕмĕр тесе, нумай шавланă, хаçатсене çырса пĕлтернĕ. Тĕрĕслесе пăхсан, ĕç пачах урăхла курăнчĕ. Кунта вулама та, çырма та пĕлмен çынсем 39 тупăнчĕç.

Суйма, государствăна улталама пăрахмала! Пирĕн задачă халĕ—хут пĕлмен çынсемпе сахал пĕлекен çынсене вĕрентсе, политикăла пурнăçа активлăн хутшăнма пулăшмала. Комсомолецсем, пионерсем, йалти интеллигенци, кашни хут пĕлекен совет гражданинĕ хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе хăй çине пĕр-пĕр татăклă ĕç илмеле. РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас кунсем çывхарса килеççĕ. Суйлав кунĕ тĕлне пирĕн республикăри кашни гражданина хут пĕлекен тумала.

Май уйавне çĕнĕ ӳсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн

ÇĔМĔРЛЕ „Труженик" савăтăн фанерă цехĕнче ĕçлекен маçтăр Иван Çмирнов йулташ йертсе пыракан çменă 1-мĕш квартăл планне 107 процент тултарчĕ.

Унăн çменинчи стаханăвецсем—Намеçникăвă йулташ нормăна 180 процент, М. Рубцовă—154 процент, В. Горйачевă—154 процент, Т. Йакăвлĕвă—154 процент, Кузнецов—154 процент тултарнă.

Май уйавне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешме пулса, Çмирнов йулташ çмени М. Кондратйев маçтăр йертсе пыракан çменăпа социалисăмла ăмарту догăварĕ турĕ.

М. С.

ЛЕНИН КИЛНИ

1.

Револ̧уциле Роççийăна килме çул шырани

Феврал̧ти револ̧уци вăхăтĕнче Ленин Швейцаринче пулнă. Переворот çинчен пирвайхи хыпарсем пулсанах парти çулпуçĕ çулăм хыпса илнĕ çĕре çийĕнчех кайма шут тытнă, çав çулăма вăл хăйĕн пурнăç тăршшĕнче ырми-канми чĕртсе пынă. Вырăс револ̧уцийĕ умĕнче мĕнле малашлăхсем уçăлнине тата унăн çулĕ çинче мĕнле хăрушлăхсем тăнине Ленин никамран та лайăх малтанах курса тăнă. Нумай çулхи кĕрешӳ опычĕ тăрăх вăл çакна пĕлнĕ: револ̧уцин чи хăрушă тăшманĕсем—унăн суйа тусĕсем, вакбуржуалă лачакари павраçăсем,—рабочи класăн интересĕсене ĕнтĕ пĕр хут мар сутнă меншевиксемпе ес-ерсем пулаççĕ.

„Çĕнĕ правительствăна шанцин тата хута кĕнин тĕсĕ те пулмала мар (Керенскийне, Гвоздĕва, Чхенкелине, Чхеидзене тата Ко шаннин тĕсĕ те пулмала мар) тата **хĕçпăшалланса кĕтсе тăмала, çӳллĕрех** етап вал̧л̧и **сарлакарах** никĕсе **хĕçпăшалланса хатĕрлемеле**"[1],—тесе çырнă Ленин Швейцаринчен Феврал̧ти револ̧уци пуçланни темиçе кун иртнĕ хыççăн Петроградри бол̧шевиксем ыйтса йанине ответлесе.

Çак нумай мар сăмахсенче ĕçсен пĕтĕм программине палăртса панă пулнă. Çапах та „инçетрен" директивăсем йапи çителĕксĕр пулнă. Револ̧уци вут-кăварĕ йăлкăшнă çĕре хăйĕн кайма кирлĕ пулнă. Çав вут-кăвара сӳнтернĕ çĕрте вырăс меншевикĕсене пулăшма суйа социалиссен пушар командисем çĕр чăмăрĕн мĕн пур кĕтесĕсенчен васкаса пынă.

Анчах револ̧уцилĕ Роççийăна мĕнле лекес-ха? Мĕн пур çулсене хăйсен аллинче тытса тăракан Англипе Франци бол̧шевиксене, пуринчен ытла Ленина, Петрограда иртерсе йаман. Çаратулă вăрçă çине Ленин мĕнле пăхни çинчен вĕсем лайăх пĕлнĕ. Империалисăмлă çаратулă вăрçăна тăрă шыв çине кăларнипе бол̧шевиксем вĕсене мĕнле „убыткăсем" кӳме пултарнине капиталиссем пит лайăх ăнланнă.

Бол̧шевикла партипе вырăс пролетариачĕ тĕрĕс позици йышăнасси тата кирлĕ лозунгсем тупасси паллă пулнă. Анчах Ленин килни çак çула татах хăвăртлатнă пулĕччĕ. Буржуази, вырăссен те тата йут çĕршывсенчи те, çак вăхăтра Париж коммунĕ тапхăрĕнчи буржуази пекех хăтланнă. Париж коммунарĕсем паллă револ̧уционерă Бланкине Париже тăрăлса йулнă пупсен тата архийепискăпсен ушкăнĕпе улăштарса илме ыйтсан, Коммунăн Версал̧ри палачĕсем: „Бланкине коммунарсене пани вăл вĕсем патне пĕр çар йанă пекех пулать", тесе ответленĕ.

Ленина Роççийăна йаман.

Вăл мĕнпур меслетсем çинчен шухăшласа пăхнă. Вăхăтлăх правительствăран пулăшу ыйтни пачах шанчăксăр пулнă. Вăхăтлăх правительствăн Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мил̧уков мĕн пур вырăс посол̧ствисемпе миссийĕсем патне çакăн пек пиркул̧арлă телеграммă йанă:

„Амнисти панă пирки Роççийăна таварăнма кăмăл тăвакан политикăлă емигрантсем мĕнле çын иккенĕ пирки кирек-мĕнле иккĕленӳсем сиксе тухас пулсан, çак ыйту тăрăх пулма пултаракан мĕн пур иккĕленӳсене ăнлантарса пама Министерствăн Йут çĕршыври сире шанса панă учрежденийĕ çумĕнче политикăлă емигрантсен представителĕсенчен комитет тăвăр"[2].

Мил̧уковăн çак телеграммине Йут çĕршыв ĕçĕсен министерстви çав адрĕспех йанă телеграммăпа çирĕплетнĕ, вăл телеграммăра çапла каланă:

„Емигрантсене паспăртсем панă чухне вĕсем вăрçă йенчен шанчăклă пулнине ытти тивĕçлĕ емигрантсем йе пирĕн телеграммă тăрăх тунă комитетсем кăтартса панипе ĕçлеме пултаратăр"[3].

Ленин „вăрçă йенчен шанчăклă пулнине", ăна Вăхăтлăх правительствă пек ăнлансан, „тивĕçлĕ" емигрантсенчен нихăшĕ те свидетельствă пама пултарайман. Вăрçă пирки Ленинăн мĕнле позици пулнине пурте пĕлнĕ. Роççийăна лекмешкĕн урăх çул шырамала пулнă. Н. К. Крупскайа Ленин планĕсем çинчен çапла каласа парать:

„Илйич ларма-тăма пĕлмест. Вăл Бронскине контрабандист урлă мĕнле те пулсан Германи витĕр Роççийăна тухса кайма май пуррипе çукки çинчен пĕлме ыйтрĕ. Часах паллă пулчĕ: контрабандист Берлина çеç çитерме пултарать. Кунсăр пуçне тата контрабандист темле майпа Парвуспа çыхăннă пулнă, вăрçăра пуйнă тата социал-шовинист пулса кайнă Парвуспа Владимир Илйич нимĕнле ĕç те тăвасшăн пулман.

Урăх çул шырас пулать... Илйич çĕр каçипех çывăрмасть. Пĕрре çĕрле: „Пĕлетĕн-и, епĕ чĕлхесĕр швед паспăрчĕпе кайма пултаратăп", тет. Епĕ кулса йатăм: „Ĕç тухмасть, тĕлĕкре калаçма пултаратăн. Çĕрле тĕлĕкре кадетсене курсан, ыйăх тĕлĕшпе: сволăч, сволăч, тесе калăн. Ак вара есĕ швед маррине пĕлеççĕ"[4].

Ленин вал̧л̧и пĕр çул кăна йулнă: вырăс емигранчĕсене Германи çарĕнчен тыткăна илнисемпе улăштарса илесси çинчен вырăс правительствине сĕнес, Германи урлă каймала. Пĕтĕмĕшпе каласан, ку çула тĕрĕслесе пăхнă ĕнтĕ. Вăрçă вăхăтĕнче шултра буржуалă либерал М. Ковалевский Германи урлă пынă, тата столицăра ваксалта ăна Мил̧уков хăй чаплăн кĕтсе илнĕ, Мил̧уков вăл вăхăтра министр пулма çеç ĕмĕтленнĕ. Саламласа каланă сăмахĕнче Мил̧уков Германи урлă килни сутăнчăклă ĕç пулни çинчен пĕртте шарламан. Çав Мил̧уковах—хал̧ ĕнтĕ Вăхăтлăх правительствă министрĕ—Владимир Илйича пачах урăхла кĕтсе илнĕ.

Германи урлă килес шухăш пĕртте Ленинăн пулман. Çак плана Англи правительстви вăрçа хирĕç тăракан çынсене Роççийăна йаманни паллă пулсан, паллă меншевик Мартăв кăларса тăратнă. Ес-ерсен, бундовецсен тата меншевиксен партийĕсен представителĕсен канашлăвĕнче Мартăв планне йышăннă пулнă. Роççийăна телеграммăсем йанă, вăл телеграммăсенче емигрантсене Роççийăна кĕртме ыйтнă, ун вырăнне Германипе Австрин тыткăна лекнĕ çыннисене йама ыйтнă. Емигрантсем ответ илесси икĕ ерне хушши ахалех кĕтсе пурăннă. Вăхăтлăх правительствă телеграммăсене сукна айне пытарнă пулмала. Англипе вырăс правительствисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пынă.

Çакăн хыççăн тин Ленин бол̧шевиксене Германи урлă Роççийăна йарасси çинчен Мартăв кăларса тăратнă плана пурнăçа кĕртме шут тытнă. Çак тĕлĕшпе оборонецсемпе буржуази мĕнле хытă шавлама пуçлассине малтанах курса тăрса, Ленин Роççийăна кайма хатĕрленес йенпе туса ирттерекен кашни ĕçе документаци тăвассине уйрăмах пысăк вырăна хунă. Бол̧шевиксене Роççийăна кĕртессине Вăхăтлăх правительствă хирĕç тăнине тăрă шыв çине кăларакан мĕн пур доказательствăсене тĕплĕн пухса хатĕрленĕ. Хăй Швейцаринчен тухса кайнине Ленин чылай интернационалиссемпе килĕштерсе тунă, вĕсем вăл тĕлĕшпе çакăн пек зайавлени йышăннă:

„Çакăнта алă пусакансем вырăс интернационалисĕсем тухса кайас тĕлĕшпе Антантă правительствисем тăвакан йăвăрлăхсем çинчен, тата вĕсене Германи урлă йарас тĕлĕшпе Германи правительстви йышăннă условисем çинчен пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем çакна ăнтĕмпех ăнланса тăраççĕ: Роççийăра вăрçа хирĕçле йухăма вăйлатас тесе çеç Германи правительстви вырăс интернационалисĕсене Германи урлă кайма ирĕк парать. Çакăнта алă пусакансем çакăн пек зайавлени тăваççĕ.

„Вăрçă пынă пĕтĕм вăхăтра мĕн пур империалисăмсене хирĕç, уйрăмах Германи империалисăмне хирĕç, ырми-канми тата мĕн пур вăйсемпе кĕрешнĕ вырăс интернационалисĕсем, револ̧уцине усă тăвасшăн ĕçлеме Роççийăна таварăнаççĕ; хăйсен çак ĕçĕпе вĕсем мĕн пур çĕршывсенчи пролетариата, уйрăмăн илсен Германипе Австри пролетариатне, хăйсен правительствин хирĕç кĕрешме пуçлама пулăшĕç. Вырăс пролетариачĕн паттăр кĕрешӳ примерĕ çакăн пек кĕрешӳве чи лайăх тата чи вăйлăн хавланатарни пулса тăрать. Çаксене пурне те шута илсе çакăнта алă пуснă Швейцари, Франци, Германи, Пол̧шă, Швеци тата Норвеги интернационалисĕсем çапла шутлаççĕ: хăйсен вырăс йулташĕсен вĕсене Роççийăна таварăнма сĕннĕ майпа усă курма права пур çеç те мар, тата вĕсем вăл майпа усă курма тивĕçлĕ"[5].

Ленин сĕннипе Швейцаринчи социалисла парти çекретарĕ Фриц Платтен Германи представителĕсемпе килĕшӳ тунă, çав килĕшӳ тăрăх:

1) мĕн пур емигрантсене, вĕсем вăрçă çине мĕнле пăхнине шута илмесĕр, пропуск панă;

2) емигрантсен вакунне ухтарман, кон̧трол̧ йе тĕрĕслӳ туман;

3) емигрантсем Роççийăна çитсен унта пынă емигрантсене Германипе Австрин тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе улăштарма ыйтма обйазательствă илеççĕ.

Ытти емигрантсен ушкăнĕпе тата Германи урлă кайассине организациленĕ Фриц Платтенпа пĕрле мартăн 26-че Ленин Швейцаринчен Стокгол̧ма тухса кайнă, унтан Финл̧анди урлă Петрограда тухса кайнă.

Ленин тата унпа пĕрле пулнă бол̧шевиксем Германи урлă кайнă чухне уйрăм вакун çинче пынă, Германи урлă каймали условисем тăрăх Германи влаçĕсем вакун çинче кайакансемпе Платтен ирĕк парсан çеç курса калаçма пултарнă. —

[1] Ленин В. И. Два письма А. М. Коллонтай. Сочинения, том XX, стр 8.

[2] Попов А. Л. Дипломатия Временного правительства в борьбе с революцией. „Красный архив", 1927 г., том I(XX), стр. 4—5.

[3] Çавăнтах, стр. 5.

[4] Крупская Н. К. Из эмиграции в Питер. В книге: Платтен Ф. Ленин из эмиграции в Россию. Март 1917 г. „Московский рабочий", 1925 г. стр. 113—114.

[5] Протокол о проезде через Германию. Ленинский сборник II, издание 3, Москва, Госиздат, 1924 г., стр: 392—393.

I Ц. Б. им. Гольцева I

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Ирхи тĕштырăсене акма тухрĕç

ЙЕЛЧĔК, апрелĕн 14-мĕшĕ (телефонпа). Çанталăк пĕр пек ăшă тăма пуçларĕ. Уйхирсем пĕтĕмпех йуртан тасалса çитрĕç, çĕр типсех пырать. Районра пурĕ 52 колхозран 27 колхоз кĕрхи калчасем çине клевер акмали плана тултарнă. Пайанхи куна пурĕ 1846 гектар акнă. „Хĕрлĕ Темйаш“ тата Киров йачĕпе тăракан колхозсем тĕштырăссене акма тытăнчĕç. Вĕсем хыççăн „Комбайн“, М. Горький, Ленин тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсем тĕштырăссене акма тухма хатĕрленеççĕ. Ку колхозсене хаљ вăрлăхсене йаровизацилеççĕ.

Ф. Майков.

МТС çуракине хатĕрленсе çитмесĕрех тухрĕ

ЙЕЛЧĔК. Пайан, апрелĕн 14-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, орденоносеç Павлăв йулташăн трактăр бригади çуракине тухрĕ. Кармаликăвпа Тйапукăв трактариссем 2,5 гектар сухаланă, кĕçĕр вĕçем çĕрĕпех ĕçлеççĕ. МТС-ри ытти трактăр бригадисем те ыран уйа тухаççĕ.

МТС дирекцийĕ ÿрĕккен-çÿрĕккĕн ĕçлени хаљ тин уçăн палăрчĕ. Трактăрсемпе çĕрле ĕçлеме 15 трактăр ваљљи динамосемпе лампăсем çитмеççе тата провăлсем те çук. МТС дирекцийĕ трактăрсен çав пайĕсене хĕллехи вăхăтра тупса хатĕрлемен.

Трактăриссене иртнĕ çулхи ĕçшĕн хаљ те тÿлесе татман. МТС-ăн пурĕ 65 пин тенкĕ тÿлемеле, анчах та директăр заместителĕ Тимофейев йулташ ку ыйту тĕлĕшпе нимĕн те тумаст.

Ф. М.

Клевĕр акаççĕ

*** ЕЛĔК. (Телефон тăрăх). Колхозсем уй хир йуртан тасалса пына май клевĕр акма тухрĕç. Пайанхи куна районĕпе пĕтĕмпе 300 гектар ытларах акнă. Вăл шутран Килдеш колхозĕ 73 гектар, Мăн Пакăи колхозĕ 23 гектар, Шĕмшĕвеш колхозĕ 23 гектар акса хăварчĕç.

Анчах та хăшпĕр колхозсем çуракине начар хатĕрленнĕ. Атманкассинчи колхозăн 2 центнĕр, Кармал колхозĕн 50 килограм клевĕр вăрлăхĕсем çитмеççĕ.

В. Йефремăв.

*** Шăнкăртам районĕнчи колхозсем кĕрхи тыра калчисем çине клевĕр акас ĕçе апрелĕн 9-мĕшĕнче тытăнса 4 кун хушшинче пурĕ 986 гектар акнă. Çав май кĕрхи тырăсем çине клевер акмали плана 98,6 процент тултарнă. Районра „Осоавиахим“ колхоз çеç клевĕр акаймасăр йулнă.

Г. Йулдашĕв.

Колхоза кĕреççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Иртнĕ çулта колхозниксем пысăк тупăш илчĕç. Колхозсем кăçал та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Çакна кура, районра йанварĕн 1-мĕшĕпе апрелĕн 1-мĕшĕ хушшинче 98 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Ник. Цветков.

Агротехникăла консуљтаци

Кĕрхи тыра тата çуртри калчисене апат парасси çинчен

Калчасене суркунне апат пани вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕре пит пысăк выран йышăнса тăрать. Колхозсенчи опытсем кăтартнă тăрăх, 1937 çулта калчасене апат панипе тĕштырăсен тухăçĕ гектар çинче 2,5 — 27,7 центнĕр таран ÿсни курăнать.

Калчасене мĕнле йапаласемпе апат ма йурать? Выранти органикăлă йапаласем—çĕрĕк тăпри, лайăх çĕрнĕ вак тислĕк, фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, тислĕк шĕвекĕ, минераллă удобренисенчен—малтан азотлисем—аммиаклă çелитрăпа аммони суљфачĕ, вĕсем хыççăн суперфосфат, кали тăварĕ тата кăмака кĕлĕ,—çаксем пурте калчасене апат парас ĕçре пит лайăх йапаласем пулса тăраççĕ.

Çак йапаласене пĕр пĕтĕмĕн уйа кăларсан та тырпул тухăçĕ ÿсет, вĕсене пĕрле кăларсан, пурнинчен ытларах органикăлă йапаласемпе пĕрле минераллă удобренисемпе такса апат парсан, тухăç татах та пысăкрах пулать. Çавăн пекех тата минераллă удобренисенчен азотлисемпе (аммиаклă çелитрăпа аммони суљфачĕ) суперфосфат тата кали тăварĕ сапса апат парсан та тухăç ытларах пулать. Акă, тĕслĕхрен, пĕр кали тăварĕ çеç сапса апат панинчен тухăç çакăн чухлĕ ÿснĕ (гектар çинче):

Ыраш, Улатăр районĕнчи Иваљковăри колхозра +2,9 цент; сĕлĕ, Вăрнар районĕнчи Уравăшри колхозра +3,4 цент., çурхи тулă, Вăрнар р-чи Тÿмпек колхозĕнче +3,8 цент., сĕрулми, Вăрмар р-чи Шоркистри колхозĕнче +4 цент.

Суперфосфатпа хăй халлĕн апат пани кали тăварĕпе апат панинчен кăшт пысăкрах тухăç парать. 1937 çулта суперфосфатпа апат панинчен тухăç апат паман вырантинчен çакăн чухлĕ ытларах пулнă:

Ыраш, Вăрнар р-чи Аслă Йауш колхозĕнче +3,5 цент., сĕлĕ, Вăрнар р-чи Хумуш колхозĕнче +4,4 цент., çурхи тулă, Вăрнар р-чи Тÿмпек колхозĕнче +4,1 цент.

Азотлă удобренисемпе—аммиаклă çелитрăпа йе аммони суљфачĕпе апат пани кали тăварĕ йе суперфосфат сапса апат панинчен чылай усăлăрах. Вăрнар районĕнчи Аслă Турхан колхозĕнче ыраш калчисене аммиак çелитри сапса апат панинчен тухăç 9 центнĕр ытларах пулнă. Çав районрах Кÿстÿмер колхозĕнче аммиак çелитри сапса апат панă выранта сĕлĕ тухăçĕ апат паман вырантинчен 7 центнĕр ытларх тухнă (гектартан).

Минераллă удобренисенчен виç тĕрлине те—азотлисене, фосфорлисене тата калилисене пĕрле апат парсан тырпул тухăçĕ пурнинчен те ытларах пулать. Акă, Вăрнар р-чи А.-Турхан колхозĕнче ыраш калчи çине аммиак çелитри, суперфосфат тата кали тăварĕ сапса апат панă выранта апат паман вырантинчен 12 центнĕр таран тухăç ытларах тухнă. Кÿстÿмер колхозĕнче сĕлĕ тухăçĕ 10,3 центнĕр ытларах пулнă. Апнер колхозĕнче уптан те ытларах—17,3 центнĕр тухăç ÿснĕ.

Минераллă удобренисенчен азотлисем-аммиаклă çелитрăпа аммони суљфачĕ сапса апат панинчен тырпул тухăçĕ ытларах ÿсни кунта кăтартнă тĕслĕхсенчен аван курăнать. Анчах вĕсемсĕр пуçне çав выранах тата суперфосфат йе кали тăварĕ сапса тухсан тухăç татах та ытларах пулать. Çавăнпа та азотлă удобренисемпе чи малтанах калчасене апат парас ĕçре усă курма тăрăшмала. Вĕсем çук пулсан, йе çителĕксĕр пулсан, суперфосфат йе кали тăварĕ сапса апат парас ĕç тĕлĕшпе те чăрăнса тăмала мар, мĕншĕн тесен суперфосфат йе кали тăварĕ апат пани те тырпул тухăçне 3—4,5 центнĕр таран йе ытларах та ÿстерме пулать.

Суперфосфат йе кали тăварĕ, çавăн пекех тата кăмака кĕлĕ те (кĕл вăл калийлĕ тата фосфăрлă удобрени шутне кĕрет) клевĕр хыççăн тата таса çĕртме хыççăн акакан куљтурăсене апат парас ĕçре пит хаклă йапала шутланать. Клевĕр тата таса çĕртме уйĕнче тăпра ăшĕнче азот хăйех пухăнса пулать, çавăнпа та ун пек уй вăл выранна фосфăрлă тата калилĕ удобренисене сапсан тухăç нумай ÿсме пултарать.

Малала органикăлă йапаласемпе апат парасси çинчен. Çĕрĕк тăпри, тислĕк, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали тата тислĕк шĕвекĕ ăшĕнче кашниннех тырпула ÿсме кирлĕ азот текен йапала пур. Азотсăр пуçне вĕсен ăшĕнче тата фосфăрпа кали те нумай (тислĕк шĕвекĕ ăшĕнче çеç фосфăр сахал). Çавăнпа вĕсене пурне те азотлă-фосфăрлă-калилĕ удобрени теме пулать. Вĕсенчен çĕрĕк тăпри, çĕрсе çитнĕ вак тислĕк сапса апат парсан, çапла тунипе калчасене ÿсме кирлĕ йапаласем панисĕр пуçне тата мулчча сарнă пек пулни те пит усăллă. Вĕсем хыççăн çав выранах тата минераллă удобренисем сапса тухсан татах та аванрах пулать.

Органикăлă йапаласемпе апат пани тырпул тухăçне мĕн таран ÿстерме пултарнине кăтартас шутпа епĕр Шăхасан районĕнчи Атнаш колхозри опыта илсе кăтартасшăн. 1937 çулта Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхозра кĕрхи тулă акнă уйра çакăн пек опытсем туса иртерне:

	Кĕрхи тулă тухăçĕ (гектартан центнĕрпа)	Апат панипе тухăç ÿсни (гектартан центнĕрпа)
1. Контроллĕ вырăнта (апат паманни)	21,0	
2. Гектар çине 5-шер центнĕр кайăк тислĕкĕ, 1000-шер витре фекали шĕвекĕ, 3-шер центнĕр суперфосфат тата 1-шер центнĕр çилвинит сапса апат пани	25,0	+4,9
3. 7-шер центнĕр кайăк тислĕкĕ, +1000-шер витре фекали шĕвекĕ, +3 шер центнĕр суперфосфат, +0,7-шер центнĕр кали тăварĕ, +1-шер цент çилвинит	28,2	+8,1
4. 8,5 цент кайăк тислĕкĕ, +1000-шер витре фекали шĕвекĕ, +120-шерлав хытă фекали, +3 цент. суперфосфат, +0,7 цент. кали тăварĕ	43,6	+23,5
5. 10-шар цент. кайăк тислĕкĕ, +1000 шер витре фекали шĕвекĕ, +120 лав лаша тислĕкĕ, +3 цент. суперфосфат, +0,7 цент. кали тăварĕ	35,8	+15,7
6. 10 шар цент. кайăк тислĕкĕ, +1000 витре фекали шĕвекĕ, +120 лав лаша вити айĕнчи çĕрĕк тăпри, +3 цент. суперфосфат, 0,7 цент. кали тăварĕ	47,8	+27,7

Кунта кăтартнă удобренисене çак срукçенче уйа кăларнă: лаша тислĕкне, çĕрĕк тăприне тата хытă фекалийе — кĕркунне, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе минераллă çăнăхсене — çуркунне уйра йур кайса пĕтсенех, фекали шĕвекне виç срукра сапнă, чи малтанхи хут мартăн 31-мĕшĕнче, уйри йур ирĕлсе пĕтнĕ тĕлте.

Çак опытран ĕнтĕ çĕрĕк тăпри, хытă фекали тата лаша тислĕкĕ сапаласа тухса апат пани кĕрхи тулă тухăçне ытларах ÿстерни аван курăнса тăрать. Апат панă участкăсенчен çĕрĕк тăпри, хытă фекали тата лаша тислĕкĕ çук çĕрте тухăç уйрăмăнах сахалрах. Çавăнпа та ĕнтĕ калчасене апат парас ĕçре çав йапаласем çине хытă çавăрăнса пăхма кирли курăнать.

Калчасене апат пани тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пысăк выран йышăнса тăрать пулин те, калчасене апат панипех тырпул тухăçне ÿстерме пулать тесе шутласа тислĕк йе çĕрĕ çемçетмели урăх йапаласене уйа кăларма тăрăшманни пĕртте тĕрĕс мар. Уйхире тислĕк, торф йе урăххисене кăларса çемçетессине калчасене апат панипе улăштарма çук. Тырпулсене акас умĕн уйхире тислĕкпе йе урăх йапаласемпе çемçетсе кайран калчасене апат парса ĕçлени çеç лайăх пулма пултарнине уйхир стахановецĕсем лайăх кăтартса пачĕç.

Тĕслĕхрен, Вăрнар районĕнчи Апнер колхозне илер. 1937 çулта кунта сĕлĕ акнă вырăна виç тĕрлĕ минераллă çăнăхсемпе çемçетнĕ — аммиак çелитри 2,1 центнĕр, суперфосфат 3,6 центнĕр тата кали тăварĕ 1,5 центнĕр (гектар çине). Опытлă участкă çинче пĕр дељанки çине çав çăнăхсене акиччен малтан сапса тухса сÿренĕ, иккĕмĕш дељанки çине пурне те апат парас шутпа акнă хыççăн сапса тухнă, виççĕмĕш дељанки çине çав çăнăхсен çур пайне акиччен малтан, çур пайне апат парас шутпа сапнă. Опыт результачĕсем çапла пулнă (гектартан тухăç çакăн чухлĕ тухнă):

1-мĕш дељанкă çинче 19,1 центнĕр,
2-мĕш дељанкă çинче 17,3 центнĕр,
3-мĕш дељанкă çинче 20,9 центнĕр.

(Минераллă çăнăхсем сапман выранта тухăç мĕн пурĕ те 12,8 центнĕр çеç пулнă.

Апат панисĕр пуçне тырпулсене акиччен малтан уйхире çемçетни тырпул тухăçне ытларах ÿстерме пултарнине кăтартакан тепĕр тĕслĕхе илер.

Вăрнар районĕнчех Хирпоç колхозĕнче кĕрхи тулă акиччен малтан 1936 çулта çĕртме сухи умĕн гектар çине, 1 центнĕр аммони суљфачĕ, 3 центнĕр суперфосфат, 1 центнĕр кали тăварĕ сапнă. 1937 çулта çуркунне çав вырăнах тата 0,75 центнĕр аммиак çелитри 1 центнĕр суперфосфат тата 1 центнĕр кали тăварĕ сапса апат панă. Çапла ĕçленипе гектартан 36 центнĕр тулă тухнă (контроллĕ вырăнтинчен 16 центнĕр ытларах).

Улатăр районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхозра çĕре çемçетмелисен пĕр пайне акиччен малтан кăларса сухаласа, тепĕр пайне апат панă пек туса акнă хыççăн сапса йĕтĕн çÿсĕ тухăçне гектартан 12 центнĕра çитернĕ. Кунта çапла майпа ĕçленĕ: йĕтĕн акиччен малтан гектар пуçне 6,5 центнĕр кайăк тислĕкĕ, 3,6 центнĕр суперфосфат тата 2,4 центнĕр кали тăварĕ кăларнă; акнă хыççăн калчасене икĕ хутчен апат панă, малтанхи хутĕнче гектар çине 10 тоннă çĕрсе вакланнă тислĕк (сурăх тислĕкĕ) тата 2,4 цент. аммони суљфачĕ, иккĕмĕш хутĕнче 0,14 центн. аммиак çелитри сапса тухнă.

Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ пурте çакна палăртаççĕ: çĕре çемçетмелисенчен пĕр пайне тырпулсене акиччен малтан, тепĕр пайне калчасене апат парас майпа, кайран уйа кăларни усăлăрах пулать.

Калчасене апат парас ĕçре удобренисен нормине мĕн чухлĕ илме кирлине те лайăх пĕлмеле. 1937 çулта ыраш калчисене апат панă чух аммиак çелитрине çакăн чухлĕ нормăпа илсе опытсем туса пăхнă (гектар çине центнĕрпа):

	Гектартан ыраш тухăçĕ ÿснĕ			
	0,5 цент.	1,0 ц	1,5 ц.	2,0 ц
Вăрнар р-чи Кĕçĕн Йаушра	+5,6	+6,9	+7,8	—
Аљмен Сунарта	+4,2	+6,5	+7,5	+9,4

Сакăнтан ĕнтĕ аммиак çелитрине сахал нормă (0,5 цент.) илсе сапсан та тухăç нумай ÿсме пултарни курăнать (гектар çинче 4,2—5,6 цент.). Çелитрă нормине 2 центнĕра çитерсен те тухăç ÿсет. Анчах та, çелитрă çителĕксĕр пулсан, ăна сахалрах нормă илсе пысăкрах лаптăк çинче апат парас шутпа сапса тухсан усăлăрах пулать (çелитрă норми 0,5 центнĕртан кайа пулмала мар). Суперфосфат сапса апат панă чух ăна гектар çине 1,5—2,0 центнĕр, 40 процентлă кали тăварне 0,5—1,0 центнĕр илмеле.

Органикăла йапаласен норми тĕрлĕрен пулма пултарать, вăл чи малтанах вĕсем ăшĕнче азот мĕн чухлĕ пулнинчен килет. Тĕслĕхрен, çакăн пек нормă кăтартса пама пулать (гектар çине): тислĕк шĕвекĕ 7—8 тоннă, фекали 6—7 тоннă, кайăк тислĕкĕ 10—11 центнĕр, çĕрĕк тăпри 10—11 центнĕр. Çав йапаласем хуçалăхра çителĕклĕ пулсан вĕсен нормине 1,5—2 хут та ÿстерме йурать.

Тислĕк шĕвекĕ ăшĕнче азотпа кали нумай, анчах фосфăр пит сахал. Çавăнпа та тислĕк шĕвекĕ сапса апат панă чух унсăр пуçне тата гектар çине 1—2 центнĕр суперфосфат сапса апат парсан, усăлăрах пулать. Фекали ăшĕнче те азот нумай, анчах фосфăрпа кали сахал. Çавăнпа фекалисĕр пуçне суперфосфат тата кали тăварĕ сапса апат парсан аванрах пулать.

Калчасене апат панă чух тата çакна пĕлмеле: азотлă удобренисем, пуриччен ытларах аммиак çелитри, тислĕк шĕвекĕ тата ыттисем хыççăн калчасем пит пат мар ÿсме кайаççĕ. Çав удобренисене ытлашши нумай сапсан тырпул ÿкме пултарать тата пулса çитес вăхăт та вăрăма кайать. Çавăн пек пуласран сыхланма кирлĕ, çав шутпа вĕсене фосфăрлă тата калилĕ удобренисемпе пĕрле уйа кăлармала. Калчасем ÿкесрен сыхланас шутпа тата йашка тăварĕ сапса тухни те пулăшма пултарать, ăна тырпулсене акиччен йе суркунне калчасем çине сапса тухмала.

Тепĕр ыйту вăл—калчасене мĕнле вăхăтра апат парасси. Хăш вăхăтра апат пама усăлăрах пулнине 1937 çулта кĕрхи тулă калчисене апат панă опытсем лайăх кăтартса параççĕ (азотлă удобренисемпе пĕрле суперфосфат тата кали тăварĕ сапнă):

	Апат панă вăхăт	Тухăç ÿсни (гектартан)
Улатăр районĕнчи Алтышевски колхозра	11-V	+7,6 цент.
Вăрнар р-чи Обиковски колхозра	6-V	+8,7
А. Турханра	16-IV	+12,6

Çакă ĕнтĕ, кĕрхи тыра калчисене мĕн таран малтанрах апат паратăн, тырпул тухăçĕ те çавăн чухлĕ ытларах пулнине кăтартать. Çапла вара, кĕрхи тыра калчисене, çавăн пекех клевĕр уйне те çуркунне йур кайса пĕтсенех, тăпра ăшăнса çитиччченех апат пама тăрăшмала. Тислĕк йе фекали шĕвекĕпе апат парас ĕçе кĕрхи тыра калчисене çуркунне сÿрес умĕн туса иртермеле.

Çурхи тыра калисене калчасем шăтса тухсанах апат пама тытăнмала. Тислĕк шĕвекне, фекалийе, кайăк тислĕкне апат парас умĕн çак нормăпа шыва хутшăнтармала: 1 пай тислĕк шĕвекĕ çине 3—4 пай шыв, пĕр пай факели çине 6—8 пай шыв, пĕр пай кайăк тислĕкĕ çине 10—15 пай шыв.

Çанталăк йĕпе тăнă вăхăтра минераллă çăнăхсене çуртри калчисем çине типĕ халĕнех кăларса сапса тухма йурать, шăрăх пулсан, шывра ирĕлтерсе сапса тухни усăлăрах.

М. КОРОБКО.
Химизацин Чăваш бÿровĕ.

Бурйат-Монгол АСС республикĕн йахуçалăхĕнче малта пыракансем.
СУЛАХАЙРАН СЫЛТАМАЛА: „Улан-Одо“ колхозăн (Бичурск аймакĕ, Бурйат-Монгол АССР) кĕтÿ пăхаканĕ, орденоносеç Е. С. Санжийĕв тата ССР Сойузĕн Верховнай Совет депутачĕ Г. А. Циценова.
Сойузфото.

çакăнтан ĕнтĕ кайран „пломбăлă вакун“ çинчен калакан халлап тухнă, çав вакунта имĕш бољшевиксем Германи урлă кайнă пулать.

Çул çинче нимĕç шовинисĕсем Ленинпа калаçма хăтланса пăхнă, анчах та Ленин вĕсемпе тĕлпулма татăклăнах килĕшмен.

Швейцаринчен пĕтĕмпе 32 емигрант тухса кайнă, вĕсенчен 19 бољшевик, 6 бундовеç тата 7 сын тĕрлĕрен партисемпе ушкăнсенчен. Çакна пĕлме интереслă: Швейцарине йулнă емигрантсем, Ленинпа кайма килĕшменскерсем, апрелĕн 30-мĕшĕнчех ĕнтĕ çав çулпах Российйăна килме йышăннă, урăх майпа Российйăна ленкме май пулман. Çав емигрантсем хушшинче пĕр бољшевик та пулман.

2.

Ленин Петроградра

Сойузлă империалиссем Ленинăн кашни утăмне сивĕччĕн сăкаса тăнă. Апрелĕн 3-мĕшĕнче, вăл Петрограда çитнĕ кун, Англи посољстви вырăссен Йут çĕршыв ĕçĕсен министерствине Ленина хаклаçа çырнă запискă панă.

„Ленин—лайăх организатăр тата пит хăрушă çын,—тесе çырнă вăл запискăра,—тата, **питех те пулма пултарать,** Петроградра ун хыççăн пыракансем нумай пулĕç“[6].

Çав кунах Йут çĕршыв ĕçĕсен министерствине Франци посолĕнчен те запискă пынă, çав запискăра та Ленин Германи урлă килни çинчен каланă.

Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕн йулташĕ А. Нератăв вăл документсем çине çакăн пек паллă тунă:

„Виççĕмĕш çĕртен илнĕ сведĕнисене пурне те, ăçтан илнине кăтартмасăр, ыранах хаçатсем çинче пичетлесе кăлармала тата Германи правитĕлстви Ленина т. ыт. кăмăллă пăхнине паллă тумала“[7].

Ленин Российйăна килни тавра суйача елек çăмхи çакăн пек чĕркенме пуçланă ĕнтĕ. „Çав лайăх организатăр хыççăн пыракансем Петроградра нумай пулĕç“ тесе хăранипе сойузлă империалиссем Ленина хирĕç елек сарма пуçланă. Ана вăл Германине усă кÿрес тĕлĕшпе государствăна сутăнчăклă ĕç тунă тесе айăплас патнех çитнĕ. Вăхăтлăх правитĕлствăн алли çăмăл пулнипе пĕтĕм буржуалă тата оборончĕствăлă пичет çавăн пек елеке сарма тытăннă. 1917 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче „Речь“ йатлă кадетла хаçат акă мĕн çырнă:

„Гражданин Ленинăн тата Российйăна килме васканă йулташсен Германи урлă килме çул суйласа иличчен малтан хăйсенчен çакăн пек ыйтас пулнă: мĕшĕн Германи правитĕлстви çавăн пек хатĕр тăрсах вĕсене çак халиччен илтмен пулăшăва пама васкать, мĕншĕн вăл тăшманла çĕршывăн гражданĕсене, çав çĕршыва кайакан граждансене, хăйĕн территорийĕ урлă каçарса йама кирлĕ тесе шутланă?. Ответ паллă пулнă пек туйăнать. Гражданин Ленин тата унăн йулташĕсем хăвăртрах çитни Германи интересĕсемшĕн усăллă пуласшне Германи правитĕлстви шанса тăрать, вăл бољшевиксен çулпуçĕ Германи майлă пулнине ĕненет. Халăха ыра тăвас йатпа Российйăна кайакан пĕр ответлă политикăлă деятĕл те çак хăйне йевĕр пулăшупа усă ан куртăр тесен, пĕр çакăн пек ответ пулма пултарассийех пирĕн шухăшпа пачах çителĕклĕ пулнă... Анчах çапла шухăшлатпăр: вырăссен политикăлă деятĕлĕшĕн, вăл политикă çине кирек йепле пăхсан та, Российйăра халăх массисен чĕрипе совĕçĕ патне пымали çул Германи урлă пымасть“[8].

Кадетсенчен ес-ерсем те йулман. Парти çулпуçĕ В. Чернов апрелĕн 16-мĕшĕнче „Дело народа“ хаçатра Ленин çинчен кадетсем пекех çырнă:

„Вăл çакăн çинчен шухăшламан та: хăй йенчен илсе пăхсан та ăна кайма Англи ирĕк пани аванрах пулатчĕ, ăна вырăс революцийĕ хĕсни **ирĕксĕрленĕ пулĕччĕ,** Германи ирĕк пани сăлтавĕсем йенчен илсен шанмала мар пек тухать“[9].

Пурте—Англи империалисĕсенчен пуçласа вырăс ес-ерĕсемпе меншевикĕсене çитийех—пĕр çĕртен хушни тăрăхах Ленин çинчен елекленĕ, бољшевиксен çулпуçне Германине усăлă шпионаж тăвать тесе сăмах тĕксе, ун çине кайа йулнă массăна вĕскĕртнĕ.

Çапах та пролетариат тата салтаксемпе хресченсен масси ирсĕр елеке ĕненмен. Апрелĕн 3-мĕшĕнче, Ленин килнĕ кун, Финљанди полкĕн 3-мĕш ротти буржуазин тата унăн буржуалă лагерĕн тарçисен елекне хирĕç протестлесе çырнă резолюципе тухнă:

„Российйăна Германи урлă килмели çул пĕртен пĕр хăрушсăр çул тесе шутласа, епĕр пирĕн емигрантсене Германин тыткăнри çыннисемпе улăштарма Вăхăтлăх правитĕлствă Германи правитĕлствипе халех килĕшÿ тутарччĕ, тесе ыйтатпăр“[10].

Петроград рабочийĕсем хăйсен йуратнă çулпуçне пит хаваслăнса кĕтсе илнĕ. Хулара пур йенчен те Финљанди вакзалĕ патне хăватлă демонстрацисем пынă. Ленин соратникĕсем, бољшевикла партин борецĕсем, паттăр партине тăвакан, организацилекен тата чăмăртакан çынна саламлама пынă. Революцилĕ салтаксемпе матроссем кăтартусем илме пынă, вĕсем кĕрешÿ лозунгĕсене хăвăрт йарса илнĕ. Революци çулпуçне кĕтсе илме рабочисем, работницăсем, матроссем, салтаксем, парти организацийĕсем, Хĕрлĕ гвардин малтанхи отрйачĕсем тухнă. Урамсем „Салам Ленина“ тесе çырнă йалавсем çĕкленĕ рабочисен колоннисемпе тулнă. Финљанди вакзалĕн плошчĕдне калама çук нумай халăх пуханнă.

Ленина кĕтсе илме меншевиксем те пынă. Меншевиксен лидĕрĕсем Владимир Илйича бољшевикла çулйĕршĕн кĕрешессинчен пăрантарас шутпа пынă, ăна массăсенчен уйăрма тесе пынă. Чи паллă меншевик Чхеидзе революцире хăйне хăй мĕнле тытмали çинчен Ленина нотаци каласа панă.

Меншевик Суханăв, пролетариата сутнă тата бољшевикла партине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Чхеидзепе пĕрле пулнăскер, меншевиксен шкул учителĕ Ленина революцирен пăрăнма мĕнле тархасланине курнă свидетĕл пулнă:

„Çынсен пысăк мар ушкăнĕ пуçĕнче,—вĕсем хыççăн алăк часах хупăнса йулчĕ,—„патша“ пÿлĕмне Ленин кĕчĕ, йе, чупса кĕчĕ пулас, вăл çавра шĕлепке тăхăннă, пичĕ шăнса кайнă, аллисене илемлĕ чечек çыххи тытнă. Пÿлĕм варрине чупса çитрĕ те, вăл пачах кĕтмен чăрмав çине пырса тăрăннă пек, Чхеидзе умĕнче чарăнчĕ. Çавăнта вара Чхеидзе, хăйĕн малтанхи хайар тĕслĕ сăн-сăпатне çухатмасăр, шухăшне çеç те мар, редакцине çеç те мар, тата вĕрентсе каланин тонне те лайăх тытса пырса, çакăн пек „саламлă сăмах“ каларĕ.

„Ленин йулташ, рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Петроград совечĕн йачĕпе тата пĕтĕм революци йачĕпе епĕр сире Российйăра саламлатпăр... Анчах та епĕр революцилĕ демократин тĕп задачи—революцине ун çине шалтан та, çавăн пекех тултан та тĕрлĕрен тапăнассинчен хÿтĕлесси пулать тесе шутлатпăр. Çакна тумашкăн пĕтĕм демократин речĕсене уйăрса йамала мар, пĕтĕçтерме кирлĕ тесе шутлатпăр епĕр. Есĕр пирĕнпе пĕрле çав тĕллевсене пурнăçа кĕртесшĕн тăрăшасса шанатпăр епĕр“... Чхеидзе шарламасăр тăчĕ. Кĕтмен çĕртен çакăн пек пулнипе епĕ аптăраса карăм. Çавăн пек „саламлани“ çине тата çавăн пек „анчах та“ çине мĕнле пăхмала-ха вара?.. Анчах Ленин çакăн пеккисем çине мĕнле пăхмалине лайăх пĕлнĕ пулмала. Вăл çакăнта пулса иртекеннисем ăна пĕртте тĕкĕнмен пекех тăчĕ,—икĕ йеннеле пăхрĕ, йĕри-тавра тăракан çынсем çине тата „патша“ пÿлĕмĕн маччи çине те пăхкаларĕ... унтан, ĕçтăвакан комитет делегацинчен йăлтах уйăрălчĕ те, çапла „ответлерĕ“:

„Хаклă йулташсем, салтаксем, матроссем тата рабочисем! Епĕ сирĕн урлă сĕнтернĕ вырăс революцине саламлама, сире—пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ çарăн малта пыракан отрйадне саламлама телейлĕ... Çаратулă империалисăмлă вăрçă вăл. пĕтĕм Йевропăри граждăн вăрçин пуçламăшĕ... Пирĕн йулташ Карл Либкнехт чĕннĕ тăрăх халăхсем хĕçпăшала хăйсен експлоататăрĕсене—капиталиссене хирĕç çавăрса тăратас сехет инçех мар... Пĕтĕм тĕнчери социалисăмлă революций шурăмпуçĕ çуталчĕ ĕнтĕ... Германинче пĕтĕмĕшпех вĕресе тăрать... Пĕтĕм Йевропă империалисăмĕ арканасси пайан мар—ыран, кашни кунах вăйлама пултарать. Есĕр тунă вырăс революцийĕ капиталисăм арканассин пуçламăшĕ пулчĕ тата çĕнĕ епохă уçрĕ. Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери социалисăмлă революци!“[11].

Меншевикла учитĕлсенчен хăпса, Ленин вакзал пусмисем çине тухнă. Плошчĕт хускалса кайнă. Нумай пин çын çулпуçне „урра“ кăшкăрса кĕтсе илнĕ. Ленина бронемашинă çине хăпарма пулăшнă. Владимир Илйича прожектăрсем çутатса тăнă. Броневик тÿсĕмлĕхне тĕрĕслесе пăхнă пек, пĕр вырăнта кăштах пусăкаласа тăнă та, Ленин шăйланнă халăх йенне çавăрăнса тăрса тĕнчери социалисăмлă революцийе тума чĕнсе, шанчăклăн сăмах каланă. Ленин сăмахĕ революцине тÿрех çĕнĕ пусăма çĕкленĕ.

Хирĕçлĕхсен йăвăр сыхланăвĕсенче хăвăрт тавçăрса илме тата массăсене вĕсен сывăхри тĕллевне пĕр йăнăшсăр кăтартса пама революцине пит пысăк вăйлă ăс кирлĕ пулнă.

Çав тĕллев патне массăсене тĕрĕс çулпа йертсе кайма йăланхи пек мар пит çирĕп ирĕк кирлĕ пулнă.

Шухăшăн тата ирĕкĕн çавăн пек улăпĕ Владимир Илйич Ленин пулнă та ĕнтĕ. вăл пĕтĕм çĕршывсенчи ĕççыннисен революцилĕ кĕрешÿ опытне хăй ăшне пухса, пролетариатăн задачисене ăслăлăхла ăнланас çÿллĕшре тăнă. Революци çулпуçĕ хăйĕн вырăнне йышăннă.

(История гражданской войны в СССР, том первый).

6) Попов А. Л. Дипломатия Временного правительства в борьбе с революцией. „Красный архив“, 1927 г., том I(XX), стр. 11.

7) Çавăнтах, стр. 12.

8) Приезд Ленина. „Речь“ № 78, 15 апреля 1917 г.

9) Чернов В. Ленин. „Дело народа“ № 26, 16 апреля 1917 г.

10) Третья рота гвардейского финляндского полка. „Рабочая газета“ № 38, 23 апреля 1917 г.

11) Суханов Н. Записки о революции. Кн. 3, Берлин, Гржебин, 1922 г., стр 14—15

Аргентинăри економикăлă кризис

Хаљхи вăхăтра Аргентинă чылайах йавăр економикăлă кризис тӳссе иртерет, вăл кризис, чи малтанах, пĕтĕм тĕнчери пĕрмайах ӳссе пыракан ҫĕнĕ економикăлă кризисран тухса тăрат̌. Ку ҫĕршыв економикă тĕлĕшĕнчен Англи тата Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем пек пысăк капиталисăмлă ҫĕршывсене пысăккăн пăхса тăрат̌. Сăмахсăран Аргентинă йут ҫĕршывсене сутакан таварсен 30,6 проценчĕ Англине, 11,8 проценчĕ—Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене кайса тăрат̌. Хаљхи вăхăтра епĕр Англипе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче хуҫалăх пурнăҫĕ айалала анса, чакса пынине куратпăр. Ку вăл—ҫĕнĕ економикăлă кризис ҫывхарса килнин резуљтачĕ. Ку ĕнтĕ Аргентинăри хуҫалăх конйункуринче те палăрмасăр йулма пултараймăн.

Кунсăр пуҫне тата 1937 ҫулта тырă начар пулни те Аргентинăри економикăлă лару-тăрува нумай начарлатнă, тырă начар пулни ҫак ҫĕршывăн тулашри суту-илӳне пĕчĕклетнĕ. Аргентинăра йалхуҫалăхĕ тĕп вырăнта тăракан, хуҫалăха йертсе пыракан отрăҫĕл пулса тăрат̌, йут ҫĕршывсене таварсем сутас ĕҫре йалхуҫалăх продукцийĕ 65 процент йышăнса тăрат̌.

Англири „Финаншиел Њйус" хаҫат, Аргентинăн економикăлă конйункури начарланса пыни ҫинчен пĕлтерсе, ҫапла ҫырат̌: Аргентинăра тулă тухăҫлăхĕ пĕлтĕр 240 мĕлйун бушел пулнă пулсан, кăҫал 184 мĕлйун бушел кăна хисепленет, тет. Ку ĕнтĕ, паллах, тулă тухăҫлăхĕ чылайах начар пулнине кăтартса парат̌. Анчах,—тет хаҫат,—кукурузă тухăҫлăхĕ тĕлĕшĕнчен ĕҫ тата ҫачартарах пулни курăнат̌. Пур йенчен шутласа пăхсан та, ытлашши йулакан кукурузă Аргентинăра 17,5 мĕлйун чĕрĕкрен ытла пулмаст̌; пĕлтĕр ытлашши йулакан кукурузă 33 мĕлйун чĕрĕк пулнă. Иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан, йĕтĕн вăррин тухăҫлăхĕ пĕлтĕрхинчен нумай пĕчĕккĕ, 20—25 процент пĕчĕкрех. Тирпе ҫăм тĕлĕшĕнчен те ĕҫсем кунтан лайăхах мар.

Ҫаксем пурте ĕнтĕ Аргентинăн хуҫалăх пурнăҫĕн ытти облăҫĕсенче те ĕҫсене начарлатнă. Нойаберпе декабĕр уйăхĕнчи суту-илӳ балансĕ убыткăлă пулнă. Йанвар уйăхĕнче йут ҫĕршывсене таварсем сутни ҫинчен калакан цифрăсем ҫакна кăтартса параҫҫĕ: иртнĕ ҫулхи уйăхрипе танлаштарсан, вăл уйăхра, хакĕпе пăхсан 48 процент сахалрах, хисепĕпе пăхсан 62 процент сахалрах сутнă. Шыв транспăрчĕпе таварсем ҫӳретес ĕҫ йанвар уйăхĕнче нумай чакнă; суту-илӳ карапĕсем йанвар уйăхĕнчи пек сахал тавар турттарса ҫӳрени 10 ҫул хушшинче те пулман. Чукунҫул тăрăх грузсем турттарса ҫӳресси те 1937 ҫулхипе танлаштарсан пысăккăн чакса кайасса кĕтеҫҫĕ. Ла Платара (Аргентинăн тĕп гаванĕ) тулă турттарса ҫӳрекен карапсем хаљ пачах та ҫук. Ытти коммерчĕски пăрахутсем пĕтĕмĕшпех ĕҫсĕр лараҫҫĕ.

Клуб ĕҫĕ йусанат̌

КУСЛАВККА. Комбинатри рабочисен клубĕ заведуйушчисем час-часах улшăнса тăнă пирки нимĕнле куљтурăлă-массăлă ĕҫ те туса пыман. Клубра пĕр кружок та ĕҫлемен.

Хаљхи вăхăтра клуб хайĕн ĕҫне йусаса пырат̌. Клуб заведуйушчийĕ пулса ĕҫлекен М. Кудрйавцĕв йулташ клуб ĕҫне лайăхлатассишĕн тăрăшат̌. Клубра вырăсла тата чăвашла драмкружоксем ĕҫлеҫҫĕ. Чăвашла драмкружок майăн 1-мĕшĕнче спектакаљ лартма хатĕрленет.

Клубра библиотекă тата вуламаљ залпур. Библиотекă кăҫал ҫĕнĕрен кĕнекесем 1500 тенкĕлĕх илнĕ. Читаљнăра йаланах ҫĕнĕ хаҫатсем пур.

Клубрах шашкă-шахмăт кабинечĕ пур. Апрелĕн 12-мĕшĕнче комбинатра шашкă-шахмăт турнирĕ пуҫланчĕ.

Ку таранчен клуб правленийĕ пулман. Апрелĕн 3-мĕшĕнче клуб правленине суйланă. Халĕ клуб правленийĕ клубра тĕрлĕрен ĕҫсене туса пыма тăвата ҫекци уйăрнă.

Клубра пукансем ҫителĕксĕр, пылайĕшне йусамала. Анчах комбинат дирекцийĕ йаланах „тăватпăр" тесе ĕҫе тăсса пырат̌. Ку ĕнтĕ клуб ҫине ҫителĕклĕ ҫаваранса пăхманнине пĕлтерет. Хапрăк-савăт комитечĕ те сахал пулăшат̌, ҫителĕклĕ таран работниксем памаст̌. Тĕрлĕрен костӳмсем илме укҫа уйăрнă пулин те савăт комитечĕ „сметă ҫирĕплетмен, унсăрăн укҫа ҫук", тесе ларат̌.

Клуб ĕҫĕ ҫине пуринчен ытла хапрак-савăт комитечĕн ҫаваранса пăхмала, клубшăн вăл ответлă.

Ив. Константинăв.

Освод станци ҫинчен

Чăваш Осводĕн Шупашкарти шыва путассинчен ҫăлакан станцийĕ ҫурхи шывсем вăхăтĕнче пулакан инкексемпе хастарлăн кĕрешет. Шупашкар тĕлĕнче Атăл пăрĕ тапраннă вăхăтра Атăл варринче ĕҫлекен гидро-метеорологи партин командине ҫăлас тĕлĕшпе хайулă ĕҫ турĕ. Пысăк хăрушлăх пулнă пулин те, командăн мĕн пур ĕҫ хатĕрĕсене тата пилĕк ҫынна ҫырана илсе кăларнă. Пăр тапраннă вăхăтра Атăл ҫинче пулнă икĕ ҫынна шыва путасран ҫăлнă. Апрелĕн 9-мĕшĕнче шыва путассинчен ҫăлакан станцы работникĕсем Миљутинри хăма ҫуракан савăтра ĕҫлене вăхăтра йавăр аманнă Сорокин йулташа хулари поликлиникăна илсе кăҫас тĕлĕшпе хайулă ĕҫ турĕҫ.

Чăваш Осводĕн Шупашкарти шыва путассинчен ҫăлакан станцийĕ пысăк ĕҫ тăват̌ пулин те, снабжени организацисем станцине кирлĕ хатĕрсемпе материалсене памаҫҫĕ. Хаљ моторлă катĕра сăрламала, анчах сăрпа олифă ҫук пирки ĕҫ чаранса тăрат̌.

Социалисăмлă пурлăха, ҫынсене ăнсăртран шыва путассичен сыхлăма пĕтĕмпе 44 ҫынран дружинă организациленĕ, вĕсемпе икĕ хут канашлу туса иртернĕ. Унсăр пуҫне станци ҫумĕнче санитари кайути тунă.

Освода тивĕҫлĕ органсен пулăшу парас пулат̌. Вара епĕр социалисăмлă пурлăх тата аслă Совет Сойузĕн гражданĕсем шывра инкек курассине хирĕҫ кĕрешнĕ ҫĕрте татах та пысăкрах ҫитĕнӳсем тума пултаратпăр.

Шупашкарти Освод станци начаљникĕ **И. Сомăв.**

Ача йаҫли пуҫлăхĕсен курсĕ

ИШЛЕЙ. Районри сывлăх пайĕ ҫумĕнче колхозсенчи ача йаҫли пуҫлăхĕсен пĕр уйăхлăх курсĕ уҫăлчĕ. Курсра 13 хĕр вĕренет.

Г. Шчербаков.



Улатăрти художĕствăлă гравӳрă шкулĕнчи IV-мĕш класра вĕренекен В. СТРЕЖЊОВ ӳкерчĕкĕ—„Йавăҫ йухтараҫҫĕ". (Йавăҫ ҫине ӳкернĕ).

ХУЛАРИ БИБЛИОТЕКĂ

Библиотекă халăх йуратакан куљтурă ҫурчĕ пулса тăчĕ. Библиотекăран темĕн чухлĕ ҫын кĕнеке вулама илет. Улăн читаљнине пĕр-пĕр урок вĕрепме, пушă вăхăтра хаҫат-журнал вулама пыракансем те нумай.

Акă, Шупашкарти Горький йачĕпе тăракан библиотекă. Ку библиотекăна, иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан, сăн-пит нумай кĕчĕ. Халăх та унта нумай ҫӳреме пуҫларĕ.

Библиотекă час-часах выстăвкăсем организацилет. Пĕр-пĕр уйав йе йубилей вăхăтĕнче ун ҫинчен ҫырнă кĕнекесене тата уйрăмăн хаҫат-журналсем ҫинчи статйасене касса кантăклă витрина ăшне вырнаҫтарат̌. Тĕслĕхсем илĕпĕр. Кăҫалхи йанварте, В. И. Ленина асăннă кунсенче, библиотекă хайĕн ҫуртĕнче тата кино-театрта выстăвкăсем организацилерĕ. Вырăссен аслă писатĕлĕ М. Горький ҫурални 70 ҫул тултарнă тĕле выстăвка туса иртерчĕ. Библиотекăна пынă ҫын ҫак выстăвкăна пăхса, Горький ҫинчен ҫырнă кĕнекесене пĕлсе тăма тата вăл кĕнекесенчен хăшне-пĕрне илсе вулама пултарат̌. Ку ĕнтĕ мĕнле кĕнекесем, мĕнле статйасем вулама кирли ҫинчен агитацилемели май пулат̌.

Библиотекă кăнтăрла вуннĕр сехетре уҫăлат̌. Унта кĕнеке вулама йе йатарласа ҫĕнĕ хаҫат-журналсене пăхса тухма кĕмеле пулат̌. Кĕретĕн. Умăнта хут ҫакăнса тăрат̌: **„Соблюдайте тишину".** Ăна ĕнтĕ библиотекăна кĕрсен шăп ларма кирлине асăрхаттарса ҫырса ҫапнă.

Есĕ библиотекă коридорĕнче тăратăнха. Санăн залăна кĕмеле. Аплатăк, тумтир хывмала пулат̌. Тумтир хывса ҫакма коридортан сулахай йенчи алăкпа ансăр та чăнкă картлашкапа подвала анатăн. Пире унта анса хăпарма йавăр мар. Тумтирсем ҫакнă ҫĕрте 7—8 сехет хушши тăракан ҫынăн сывлăхне хĕрхенмеле. Подвалĕ сивĕ. Сывлăш чĕрĕ.

Залăна кĕнĕ ҫĕрте тепĕр регистратăршă ларат̌. Вăл библиотекăна пыракан кашни ҫынран „допрос" туса илет. Кам вăл библиотекăна пыракан ҫын: рабочи-и, служăшчи-и, вĕренекен-и, миҫе ҫул вĕреннĕ, пĕр сăмахпа каласан, кашни ҫын ҫинчен анкетă тултарат̌. Тупнă та май учота илмели! Питĕ те чăкраш капла. Тумтирсем ҫакнă ҫĕрте, регистратăршă патĕнче, йулашкинчен тата вулав залĕнчи кĕнекесем илнĕ ҫĕрте черет тăраҫҫĕ. Висĕ черет. Ҫак вăхăтра вара пĕр урок вĕренесен йе пĕр-пĕр хаҫатри стат̌йана вулас вăхăт иртет.

Иртнĕ ернесенче кĕнекесене залăра вулама паспăртсăр памасчĕҫ. Халĕ тата профсойуз кĕнекисĕр пуҫне пĕр кĕнеке те, хаҫат та памала мар тунă. Хăшĕ вара профсойуз членĕ мар пулсан, пĕр кĕнеке те илсе вулаймаст̌. Ҫак чăрмавлă йĕркене—йĕркене кӳресех пулат̌.

Библиотекăна ҫӳрекенсен хисепĕ куллен ӳсет. Анчах унта ларма-тăма сĕтел пукан сахал. Залĕсем ҫителĕксĕр. Апла пулсан вулакансем ваљђи тата урăх залăсем тупса памала пулат̌.

Ив Моҫейĕв.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

◆ Иетĕрне районĕнчи Атликассинчи „Борец" колхозăн сысна ферми пуҫлăхĕ Тимофейĕв пĕр каҫ хушшинче 8 сыснана емел парса вĕлернĕ. Ҫакăн хыҫҫăн вăл, Моиҫейĕв Иванпа пĕрле, вилнĕ сыснасене пытарнă пек туса, вĕсен урисемпе пуҫĕсене кăна ҫĕр ăшне пытарнă, ашĕсене хăйсем ваљђи илсе килнĕ.

Выљăх тухтăрĕ Вожарăв ҫак ĕҫе тĕрĕслеме пырсан Тимофейĕв патĕнче ерех ĕҫнĕ, ĕҫе пĕтерсе хунă,—тесе пĕлтернĕччĕ пире колхозниксем. Заметкăна ПСК(б)П Иетĕрне райкомне тĕрĕслеме йанă хыҫҫăн, заметкăри фактсем тĕрĕсси курăннă. Ҫав сăтăрла ĕҫшĕн айăплисене суда пама следстви пырат̌.

Сыснасем мĕншĕн вилнине тĕрĕс кăтартманшăн тата ĕҫсе ӳсĕрĕлсе ҫӳренĕшĕн выљăх тухтăрне—Вожарăва парти ретĕнчен кăларнă.

◆ Ишлей районĕнчи Потомкин йачĕпе тăракан колхозра лаша хатĕрĕсене колхозниксем патĕнчех усраҫҫĕ, вĕсене тӳрлеттерме колхоз правлени укҫа паманнипе колхозниксем хăйсен укҫипе йусаттараҫҫĕ, лаша хатĕрĕсене ытти колхозниксене памаҫҫĕ. 1937 ҫулшăн инвентаризаци туса пĕтермен; колхозниксен ĕҫкунĕсене шута илсе пымаҫҫĕ,—тесе пĕлтернĕччĕ Ҫтепанăв йулташ.

Ҫак заметкăна „Чăваш Коммунĕ" редакцийĕ тĕрĕслеме Ишлей райҫĕрĕҫ пайне йанă. Райҫĕрĕҫ пайĕ:

— Заметкăри фактсем тĕрĕс. Колхоз председателне Журављова ПССЛКС райком бӳровĕнче тата райҫĕрĕҫ пайĕнче кăтартусем панă. Ҫитменлĕхсене пĕтерме колхоза уйрăм специалиссене йарса пулăшнă, тесе пĕлтерчĕ.

Колхозри драмкружок

„Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз ҫумĕнче (Патăрйел районĕ) А. Ф. Дерйагинă йертсе пынипе учителсемпе колхоз ҫамрăкĕсен драмкружокĕ ĕҫлет. Драмкружокра пурĕ 35 член. Ҫак кружок 1937 ҫултан пуҫласа 1938 ҫулти апрел уйăхне ҫитиччен 7 пйеса лартса пачĕ. Нумай рољсене колхоз ҫамрăкĕсем выљаҫҫĕ. Ватă колхозник Иван Тарасăв та спектакаљре выљат̌. Кружок ытти колхозсене те тухса ҫӳрет. Артиссем тăрăшса выљанине тата кружок ĕҫне халăх ырлат̌.

И. Чернов.

Библиографи

ҪĔНТЕРӲ ЙУРРИ*)

Пирĕн умра Аркади Еҫхĕлĕн ҫĕнĕ кĕнеки. Кĕнекере 49 сăвă. Вĕсенчен нумайăшне йулашки икĕ ҫул хушшинче ҫырнă.

Поетăн ҫĕнĕ кĕнеки пире савăнтарат̌, хаваслантарат̌. Кĕнекери кашни сăвă пирĕн пурнăҫпа, пирĕн ҫĕнтерӳсемпе ҫыхăннă. Сталинла Конституци, мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар, уй-хир сăнне ҫĕнетекенсем, Ҫурҫĕр пољусне ҫĕнсе илекенсем, колхозра пуҫласа телейлĕ пурнăҫ тупнă мучисемпе кинемейсем, вĕри йунлă паттăр ҫамрăксем,—ҫаксем пурте кĕнекере тивĕҫлĕ вырăн йышăннă. Поет пирĕн пурнăҫа, ҫĕнĕ пурнăҫа йурласа парат̌.

Кĕнекере Сталинла Конституци ĕҫхалăхĕн ĕмĕр сӳнми хĕвелĕ пулса сăнланат̌. Епĕр вулатпăр:

Сталинла Конституци хĕвелĕ
Ăшшăн-ăшшăн лăпкат̌ ҫĕршыва.

Ĕҫхалăхĕ, ҫĕршыв чăнлăхăн аслă Конституцине ĕмĕрсем тăршши кĕтсе пурăннă. Поет сăнлат̌:

Етем кĕтнĕ ăна авалтан, ĕмĕртен,
Ĕмĕр кĕтнĕ те ĕмĕр ăмсаннă.
Шăранан хурсăра, вĕрекен тимĕрте,
Епĕр курнă ăна, епĕр шаннă.

Кĕнекери чи лайăх сăвăсенче ĕҫхалăхĕн паттăр ҫулпуҫĕсене Ленинпа Сталина сăнласа панине куратпăр. Вĕсен сăнне автăр вулакана хумхантаракан тĕсҫемпе кăтартма пултарнă. („Ҫурхи йурă", „Пирĕн Конституци").

Уйрăмăнах уй-хир сăн питне социалисăмла ĕҫпе ҫĕнетекен паттăрсене кăтартакан сăвăсем нумай. Вăл—„Ҫĕре йуратни" йатлă циклра. Цикла кĕрекен сакăр сăвă—пурте вулакана хумхантаракан сăвăсем. Социалисăмла чĕлӳсемпе, социалисăм техникипе хĕҫпăшаллана етем ҫутҫанталăк стихийине ҫĕнтерет. („Кĕрешӳ", „Ҫĕнтерӳҫĕ").

Сакăнта, ҫак ҫăлтăр айĕнче манăн
тантăш,
Пĕрле ӳснĕ йулташ, тĕнче паттăрĕ
пек,
Нӳрĕ тулăх ҫĕре тĕплĕн, тараннăн,
анлăн
Хускатса ҫĕнетет Сталин трактăрĕпе..
Саварттар, тантăш, уҫ сереме! Сутă
ҫăлтăр
Айĕнче ес коммунă ĕҫне васкатан...

Поет пурнăҫран йулса пымаст̌. Испанири ĕҫҫыннисем фашисăма хирĕҫ кĕрешнине, хурҫă нарком Йежов йертсе пынипе ĕҫхалăхĕн хура тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла бандитсене ҫĕр патĕнчен шăлса пăрахни, социалисăмла пурлăха упрани—кĕнекере ҫаксене пурне те куратпăр. („Сăхă старик", „Тăшман", „Виҫҫĕн").

Тăшманăн ҫĕршĕнне пусĕ ҫине
Хайаррăн ӳкрĕ пирĕн хурҫă алă,
Ылханлă ирсĕрсем, ҫухалăр!
Ан пăсăр, ан варлăр тĕнчене...

„Акатуй сăввисем" цикл пирки. Цикăлри сичĕ сăвă пĕр темăпа сыхăнса, пирĕн колхозниксен савăнăҫне туллин ҫутатса парат̌.

Йĕм-йешертĕр уй-хир, сĕрĕшсе
ӳстĕр тыră,
Пысăк тупăшлă килтĕр умри
кĕркунне.
Ҫĕршыв пултăр пуйан, пурнăҫ—
тулăх та ырă,
Халăхсем, атăр, тытăр хĕвел куркине!

Поет сăвă маҫтăрлăхĕпе хĕҫпăшалланнă. Чăн-чăн поезин сĕткенĕ халăх творчĕствинчен тухса пырат̌. Еҫхĕл ҫакна та аван чухланине куратпăр:

Карлăк урлă кармашса
Илтĕм алтăр-ҫăлтăрне..
Ҫирĕк урлă сĕкленсе
Илтĕм уйăх витрине..
Пĕр пăрчăкан кăларнă сичĕ чĕпĕ,
Пĕри—куккукăн, улташ—хайĕнех:

Кунта епĕр нумай примерсенчен хăшпĕрине ҫеҫ кăтартрăмăр. Поет халăх творчĕствипе вырăнлă усă курма пĕлет. „Ҫурхи йурă" йатлă сăвă кăна тата та ҫирĕплетсе парат̌. Халăх поезин кĕвви тăрăх ҫырнăскер, вăл сăвă ҫĕнĕ йанăравлă, илемлĕ шăранса тухнă.

Еҫхĕл хăй илнĕ темăсене сăнласа пама лайăх пĕлет. Ку аван. Анчах ҫакна калас пулат̌: хăшпĕр сăвăсенче епĕр образ ҫине образ утлантарса пынине куратпăр. Ку—сăвва йавăрлатат̌, унăн ăнланулăхне чакарат̌. Тепĕр ҫĕрте килĕшӳсĕр сăнлăхсем те пур:

Каҫхи сăнсем сиҫеҫ хаваслăн
Колхоз ĕнин кусĕсенче.
(„Каҫхи сăнсем").
.. Ҫак лантăш вырăнне
Сан аллуна илсе тыттарăп
Тем пысăкĕш ҫĕр чăмăрне.
(„Ҫук, чечексен тăшманĕ мар еп").

„Ҫĕнтерӳҫĕсем" — Еҫхĕлĕн виҫҫĕмĕш кĕнеки. Ҫавăн пек пулмала та—малтанхи кĕнекисене кăларнăранпа поет пысăк утăмсем турĕ.

„Ҫĕнтерӳҫĕсем" кĕнекере автăр ҫĕнтерӳ йуррине йурлат̌. Ҫавăнпа кĕнеке пире савăнтарат̌ те.

Йулашкинчен ҫакна калас килет. Еҫхĕл нумай ҫулсем хушши ҫырат̌. Анчах епĕр унран епикăлă произведенисем кĕтсе илеймерĕмĕр-ха. Пирĕн хаваслă та тулăх пурнăҫ епикăлă темăсемпе пуйан. Ҫакă ĕнтĕ Еҫхĕлрен пысăк произведенисем ыйтат̌.

М. ЙАСТРАН.

*) Аркади Еҫхĕл—„Ҫĕнтерӳҫĕсем". Сăвă кĕнеки. Чăвашгосиздат. 1938.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

■■ Тутарла Кăнаш йалĕнчи (Ҫĕрпӳ р.) Г. Кронидăв Шупашкарти Хресчен ҫуртĕнче регистратăрта ĕҫленĕ чухне 1.091 тенкĕ растрата тунă та, 1936 ҫултанпах айакри вырăнсенче тарса пурăннă. Апрелĕн 10-мĕшĕнче ăна Шупашкарта тытнă. Растратчике арĕсленĕ.

■■ „Ҫĕнтерӳ" колхоз бригадирĕ (Йĕпреҫ р.) С. Захарăв ҫак кунсенче ĕҫсе ӳсĕрĕлнĕ те хулиганла ĕҫсем тума пуҫланă. Григорий Портнов колхозник килне кĕрсе вăл Гр. Портнова 6 ҫĕртен, унăн ывăлне Ивана 3 ҫĕрен, хĕрне—Марфăна—2 ҫĕртен тата Портнов арăмне ҫĕҫĕпе чиксе суран тунă. Гр. Портновпа унăн ывăлĕ Иван хаљ больницăра выртаҫҫĕ. Захарăва арĕслесе суда панă.

Извещение

На заседание выездной Центральной партийной тройки Комиссии партийного контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 19 апреля 1938 года в гор. Канаше в здании райкома ВКП(б), для разбора апелляции вызываются следующие товарищи:

1. Иритков Александр Семенович, проживающий в г. Чебоксарах, улица Плеханова, 30.
2. Герасимов Селиверст Герасимович (Канаш, ВРЗ).
3. Еливанов Василий Петрович (Шихирданы).
4. Капков Халим Яхтямович (г. Казань, ул. Межлаука, 11, кв. 5).
5. Трофимова Екатерина Романовна (раз'езд Буинск, лесозавод).
6. Швецов Александр Васильевич (г. Цивильск, ул. 1-е Мая, д. № 7).
7. Базранов Ермолай Захарович (с. Мижеркасы, Красночетайского района).
8. Лысов Николай Васильевич (с. Мижеркасы, Красночетайского района).
9. Манин Гавриил Алексеевич (гор. Шумерля, межрайбаза Чувашсоюза).
10. Кириллов Степан Спиридонович (с. Ново Тинчурино, Яльчиковского р.).
11. Тарасов Михаил Павлович (город Шумерля, комбинат, д. № 32, кв. 29).

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

Чăвашвăрманпромăн Улатăрти автошкулĕ

Чăваш республикĕнчи пур предприйатисене тата колхозсене автохуҫалăхсем ваљђи шкул ҫак условисем тăрăх шофĕрсем вĕрентсе хатĕрлесси ҫинчен пĕлтерет:

1. Автохуҫалăх хăйне ваљђи Улатăрти автошкулта шофĕрсем вĕрентсе кăларма килĕшни ҫинчен шкула пĕлтерет.
2. Шофĕр пулма кандидатсем уйăрса, вĕсене курса вĕренме йарат̌.
3. Автохуҫалăх ҫавăн пекех тата хăйне ваљђи, хăй ҫынсем уйăрса йамасăрах, шкул хăй вĕренме илнисенчен шофĕрсем хатĕрлесе пама шкулпа догăвăр тума пултарат̌.
4. Курсра пилĕк уйăх хушши вĕренмеле.
5. Вĕрентме (курсра вĕренекене матерйаљнă пулăшу парассисĕр пуҫне) 1200 тенкĕ тăрат̌. Ҫак укҫаран 50% догăвăр тунă чухне тата 50 проценчне занйати пуҫланнă кунран пуҫласа икĕ уйăх хушшинче тӳлесе татмала.
6. Черетлĕ курс ваљђи командировкăпа йанисене тата зайавленисене йышăнасси апрелĕн 5-мĕшĕнчен 20-мĕшчен.
7. Курсра 18 ҫултан иртнисене, сывлăх йенчен йурăхлине, академи пĕлӳлĕхĕ йенчен тăватă ҫул вĕреннĕ чухлĕ пĕлӳллисене йышăнаҫҫĕ.
8. Курса командировкăпа йанисем пурте медицинă йенчен пăхтараҫҫĕ, вырăсла чĕлхипе тата арифметикăпа тăватă ҫул вĕреннĕ чухлĕ испытани тытаҫҫĕ.
9. Командировкăпа йанисен ҫак документсене кăтартмала:
   1. Паспăрт (ăна вĕренме пырсан памала).
   2. Ĕҫленĕ ҫĕртен йе колхозран характеристикă.
   3. Командировкă панă удостоверени.
   4. 6 фото-картăчкă.
10. Пур организацисен те командировкă панă кандидатсене апрелĕн 23-мĕш тĕлне испытани тытма йамала.
11. Курса йама командировкă панисене ҫирĕплетсенех, автохуҫалăхсем малтанхи хут ыйтсанах, автохуҫалăхсемпе догăвăр тăваҫҫĕ.

АДРЕС: Улатăр, автошкул (малтан 9—10-мĕш №-лĕ вăрман савăчĕсем пулнă вырăнта).

3—1. Автоуправ-

КОГИЗ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ УЙРĂМĔ

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем умĕн хăйĕн Канашри, Улатăрти, Ҫĕмĕрлери, Йетĕрнери, Куславккари, Патăрйелĕнчи, Сĕнтĕрвăрринчи тата Шупашкарти магазинĕсенче ҫак кĕнекесене сутлăх тытат̌:

Вырăсла:

1. СТАЛИН—Доклад о проекте Конституции СССР. Конституция (основной закон) СССР . . . Хакĕ 30 пус.
2. СТАЛИН—Речь на предвыборном собрании избирателей Сталинского избирательного округа города Москвы 11-го декабря 1937 года . . . Хакĕ 10 пус.
3. Сборник—Речи на собраниях избирателей в Верховный Совет СССР. Хакĕ 1 тенкĕ
4. Конституция РСФСР . . . Хакĕ 10 пус
5. Положение о выборах в Верховный Совет РСФСР . . . Хакĕ 10 пус.
6. ВЫШИНСКИЙ—Положение о выборах в Верховный Совет СССР в вопросах и ответах . . . Хакĕ 25 пус.
7. Сборник—О Конституции Союза ССР . . . Хакĕ 65 пус.
8. КАЛИНИН—Что дала Советская власть трудящимся Хакĕ 15 пус.
9. ЖДАНОВ—Подготовка партийных организаций к выборам в Верховный Совет СССР по новой избирательной системе и соответствующая перестройка партийно политической работы . . . Хакĕ 30 пус.
10. БУДЕННЫЙ—Боец-гражданин . . . Хакĕ 15 пус.
11. ШВЕРНИК—Профсоюзы к выборам в Верховный Совет СССР Хакĕ 10 пус.
12. О выборах в Верховный Совет СССР (постановление Пленума Чувашского Обкома ВКП(б) . . . Хакĕ 15 пус.
13. Наша родина . . . Хакĕ 85 пус.
14. СССР и страны капитализма . . . Хакĕ 80 пус.
15. Кого мы выберем в Верховный Совет СССР . . . Хакĕ 25 пус.
16. СТЕЦКИЙ—Сталинская Конституция—воплощение идей Ленина Хакĕ 20 пус.

Чăвашла:

1. СТАЛИН—ССР Сойуз Конституци пройекчĕ ҫинчен ССР Сойузĕн Конституцийĕ (Тĕп саккун) . . . Хакĕ 70 пус.
2. СТАЛИН—1937 ҫулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнчĕ Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавҫăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче каланă сăмах . . . Хакĕ 10 пус
3. РСФСР Конституцийĕ . . . Хакĕ 25 пус
4. РСФСР Верховнăй Советне суйламалли Положени . . . Хакĕ 15 пус
5. ЧАССР Конституцийĕ . . . Хакĕ 25 пус
6. ЧАССР Верховнăй Советне суйламалли Положени . . . Хакĕ 15 пус
7. КАЛИНИН—ССР Сойуз Верховнăй Советне суйламалли Положени ҫинчен . . . Хакĕ 10 пус.
8. ССР Сойуз Верховнăй Советне суйласси, ПСК(б)П Чăваш Обком пленумĕн постановленийĕ . . . Хакĕ 15 пус.
9. СТЕЦКИЙ—ССР Сойузĕнче социалисăм ҫĕнтерни тата ҫĕнĕ Совет Конституцийĕ . . . Хакĕ 1 тен. 50 пус.

Ҫакăнта кăтартнă кĕнекесене илме васкăр!

Заказсене ҫак адрĕспа йарăр: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕд, КОГИЗ магазинĕ „Книга—почтой".

КОГИЗ Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

„Чăваш Коммунĕ" ҫырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алҫырăвĕсене кайала памаҫҫĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 196. Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 15,665 25—94 см. 1—1 п. л.